1937
НОЙАБĔР
20
ШАМАТКУН
265 (4777)-мĕш №

Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Совет хули суйлав кампанинче малта пырать

Совет йалĕ ССР Союзĕн Аслă Советне хулапа пĕртанах суйлать.

Совет влаçĕн пирвайхи кунĕсенчех пирĕн çĕршывра ĕçсыннисем патшалăх влаçĕн пур органĕсене те суйламали тата суйланмали права илчĕç. Анчах кивĕ Конституци тăрăх Совет влаçĕн органĕсен суйлавĕсем ытла пĕртанах пулман. Союзлă республикăсенчи Советсен сĕесне тата ССР Союзĕнчи Советсен сĕесне хулисен представителĕсене 25 пин суйлавçăран пĕр делегат, йалсенчен—125 пин халăхран пĕр делегат суйласа йанă. „Рабочисем çапла маларахра пулмала тунисене хресченсем пĕтĕмпех вак харпăрлăхпа пурăннă, йалта кулачество влийанийĕ пысăк пулнă чухне кĕртнĕ. Çак маларахра пулмала тунисем рабочи класăн совет государствинче йертсе пырас роļне çирĕплетрĕç, совет влаçне çирĕплетме пулăшрĕç тата, çавăнпа пĕрлех, пролетариат диктатури ĕç хресченĕсене йалхуçалăхне хăпартма, унтан вара йала социалисăмла çĕнетме те анлă пулăшу парассине пурнăçа кĕртрĕç“. (Молотов).

Пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтерни, кулаксен класне пĕтерни йалăн пĕтĕм сăн-сăпатне улăштарчĕç. Производствă хатĕрĕсене социалисăмла пĕрлештерни, колхозсен кадрĕсем ÿссе пыни—хулапа йал хушшинчи уйăрăмлăхсем чакса пыраççĕ. Сталинла Конституци совет влаçĕн пур органĕсене те, ĕçсынни депутачĕсен йал Совечĕсенчен пуçласа ССР Союзĕн Аслă Советне çитиех, пĕртан правапа суйламала турĕ. Пирĕн çĕршывра рабочисемпе хресченсен прависем пĕр[illegible]

Совет йалĕ совет хулипе çирĕп те нихăçан уйăрăлми çыхăнса тăрать. Хулапа йал хушшинчи çарлă-политикăлă, сутуилÿлĕ, производствăлă тата культурăлă смычкăна тăтăшах çирĕплетсе пырса, рабочи клас, революци гегемонĕ, революци вăхăтĕнче пĕрмайах йала политикăлă, организацилĕ, материаллă тата укçа-тенкĕлĕ пит пысăк пулăшу парса пычĕ. Революци пуличчен чухăн тата вăтам хресченсен йалхуçалăх çĕрĕсем 135 мĕлйун гектара йахăн пулнă. Халĕ колхозниксем тата йединоличниксем 370 мĕлйун гектар ытла çĕрпе усă курса пурăнаççĕ.

Çирĕм çул кайала йалхуçалăхĕнче сухапуççем, косульсем, йăвăç плугсемпе сÿресем пуçпулса тăнă; халĕ пирĕн колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенче 445 пин трактор, 121 пин комбайн, вуншар пин автомобилсем ĕçлеççĕ. Совет влаçĕ йалхуçалăх машинĕсем туса кăларассине хĕрĕх хут ытла ÿстерчĕ; фосфорит çăнăхĕ туса кăларасси 26 хут ÿсрĕ. Тĕп пулăшу йала сынсем—рабочи организатăрсем, политикăла борецсем, çĕнĕ пурнăç тăвакансем йани пулчĕ. Вĕсем хресченсене колхозсене пĕрлешме, машинлă техникăна алла илме, пуйан та культурăлă пурнăçшăн кĕрешÿ сарса йама пулăшрĕç.

Çак рабочи организаторсем, партири тата партире тăман большевиксем, Ленин — Сталин партийĕ йертсе пынипе, колхозлă йалăн мухтавлă работникĕсен, совет йалĕн йатлă çыннисен ăруне вĕрентсе ÿстерме пултарчĕç. Вăл çынсенчен нумайĕшĕсем чĕннипех государство деятелĕсем пулса тăчĕç. Колхозниксемпе ĕçхресченĕсен суйлав умĕнхи пухувĕсенче вĕсене Союз Советне тата Национальнăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртнă.

Вуншар пин йалсенче, аулсенче, кишлаксенче суйлав кампанийĕ пысăк çĕкленÿпе сарăлса пырать. Хресченсемпе хресчен-хĕрарăмсем историлĕ куна—декабĕрĕн 12-мĕшне питĕ пысăк хаваслăхпа хатĕрленеççĕ. Анчах йалти суйлав участкисенчи организацилĕ тата агитаципе пропагандăлă ĕç хуларинчен ытларах хатĕрленнĕ квалификацилĕ политикăлă руководствă ыйтать.

Совет хули, социалисăмăн тĕп крепăçĕ, йала туслă, тăванлă пулăшу памала. Партин, комсомолăн, профсойузсен, хулари организацисене йертсе пыракансен суйлава хатĕрленме йала активлă, ĕçлĕ пулăшасси политикăла тĕп задачăсенчен пĕри пулнине йлланса илмеле. Йала пулăшмали формăсем нумай. Лайăх пропагандиссене йала йани, йалта тĕресленнĕ агитаторсем хатĕрлени, йалта ĕçлекен профсойуз членĕсене активлатни, шчетленсе тухакан большевикла сăмаха анлăн сарни, радиопередачăсем организацилесси, пур йышши искусствăпа (кино, театр, тата ыт. те) усă курни—çак ĕçсене пурне те халĕ суйлав умĕнхи агитацине анлăн сарма, тăшмансен ĕçне тăрă шыв çине кăларма, совет влаçĕн çитĕнÿсене уççăн кăтартма, кашни колхозника, колхозницăна, йединоличника, йединоличницăна суйлав вырăнĕне йна организацилесси çинчен тĕплĕн йллантарас ĕçе кÿлмеле.

Мускав, Ленинград, Горький тата ытти парторганизацисем чи лайăх пропагандиссене йала пулăшма йанă та ентĕ. Йала йанă йулташсем пит те пысăк та пит те усăлă ĕç тăваççĕ. Вĕсен опычĕ большевикла сăмахпа халăх питĕ кăмăллă пулни çинчен калать. Агитаторсене ыйтусем нумай параççĕ.

Анчах та, йала суйлав кампанинче пулăшма тăрăшакан организацисем те, çак ĕçе кирлĕ таран тĕплĕн шутласа тумаççĕ. Чылай вырăнсенче ĕçлĕ пулăшăва шавлапине улăштараççĕ: йала вальли лайăх хатĕрленнĕ, политикăла тĕреслени çынсене уйăрас вырăнне, йала йăпăртлăха, даскавлă çĕршер тата пиншер çын параççĕ, вĕсенчен цумайĕнĕ хăйсене панă ыйтусем çине ответ параймаççĕ.

[illegible] лав участкинче агитацилĕ тата организацилĕ ĕçсене йĕркелеме пулăшмаст. Башкир АССР-чен, Оренбург, Полтавă тата ытти облăçсенчен илекен нумай сигналсем — йлланатарупа пропагандăлă ĕçе сарма йал хуларан пулăшу ыйтнипе кăтартаççĕ.

Тăшманла етемсем пакăçлама, варалама, пирĕн суйлав умĕнхи кашни начар ĕçпе усă курма хăтланаççĕ. Уйрăм суйлав участкисенче кăна пулин те, суйлава салатса йарас тесе халăх тăшманĕсем нурне те хута йараççĕ. Вырăнти парторганизацисен хăшпĕр руководителĕсем, Кийев облăçĕнчи Володарск райком членĕсем пеккисем, хăйсене хăйсем лăплантарнипе, йăваш чунлăхпа чирленĕ, вĕсем халĕ пурне те туса çитернĕ, суйлавра çитĕнÿ тума пурне те тунă тесе шутлаççĕ. Чăннипе илсен, çав районрах участкăсенчи суйлав комиççисем нумайĕшĕ ĕçе тытăнман. Володарск райком руководителĕсем çапла йлланса ларни тăшманла етемсем суйлав кампанине пăсма хăтланнине обйективлă пулăшни палла мар-и?

Суйлавччен йулнă 23 кун хушшинче йалта, хулари пекех, питĕ пысăк ĕçсем туса иртермеле. Йалта кашни суйлавçăна суйлава политикăла хатĕрлемеле, вăл Союз Советне тата Национальнăçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидатăн йатне çеç мар, пурнăçне, пурнăç тата политикăла çулне, унăн мухтавлă ĕçне тата тивĕçлĕхне пĕлтĕр. Хуларипе йалти партире тăракан тата партире тăман большевиксен тивĕçĕ вăл—суйлавчен йулнă вăхăтпа усă курса, кашни суйлавçăн чĕри патне большевикла чăнлăх хĕмне çитерессипулать.

Суйлав кампанийĕ хулара та, йалта та пĕтĕм тĕпчене ĕçсыннисем большевиксен партийĕпе мĕнле çирĕппĕн çыхăнса тăнине, вĕсем Сталинла Тĕп Комитетпа Совет правительствине йуратнине тата шанса тănине кăтартать.

Хăватлă совет халăхĕ, патриотисăмăн хĕрÿлĕ сисĕмлĕхпе пĕрлешнĕскер, социалисăмла тăван çĕршывăн ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйхала параканскер, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнче умĕнче хăйĕн политикăла тата моральлĕ пĕрлĕхне, хăй большевиксен партине вĕçи-хĕррисĕр шанса тăнине кăтартать, вăл хăйĕн сассине Ленин—Сталин аслă йалавĕ айне тăрса кĕрешсе çĕнтерекенсемшĕн парать.

(„Правда“).

Информацилĕ пĕлтерÿ

Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче Шупашкар ПСК(б)П хула комитечĕн пленумĕ пулса иртнĕ. Пленум ПСК(б)П Обком IV-мĕш пленумĕн решенийĕсене сÿтсе-йавнă.

Пленум С. П. Петрова хула комитечĕн пĕрремĕш секретарĕнчен хăтарнă тата ПСК(б)П хула комитет бÿровĕпе пленум составĕнчен кăларнă. Пленум Калинкинăна (хула комитечĕн инструктăрĕ), Кисельова (хула совечĕн председателĕ пулнă) хула комитечĕн бÿровĕнчен те, пленум членĕсен составĕнчен те кăларнă. Çавăн пек тата А. П. Кузьмина, Карпова, Сымокина, Назарова ПСК(б)П хула комитет пленумĕн членĕсенчен кăларнă. Терентйевăпа Семенова ПСК(б)П хула комитет пленумĕн кандидачĕсенчен кăларнă.

Пленум вăрттăн сасăласа ПСК(б)П хула комитечĕн пĕрремĕш секретарне Г. И. Иванов йулташа суйланă, ПСК(б)П хула комитечĕн бÿро членне Соколова йулташа кĕртнĕ.

Районсенчи суйлав умĕнхи канашлусенче

Çĕршывра суйлав умĕнхи канашлусем пулса иртеççĕ. Вăл канашлусенче округри суйлав комиççисем регистрациленĕ ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсем хăйсен суйлавçисемпе тĕл пулаççĕ.

Мускав облăçĕнчи Серпухов хулинче пысăк çĕкленÿпе иртнĕ суйлав умĕнхи канашлура Серпухов суйлав округĕнче тăратнă Союз Советне депутата суйламали кандидат—Надежда Константиновна Крупскайа пулнă.

Канашлура сăмах тухса каланă „Красный текстильщик“ фабрикĕн стахановки Смолова М. П. йулташ çапла каланă: „Пирĕн фабрикăн пилĕкпинлĕ коллективĕ Союз Советне депутата суйлама кандидата—пирĕн çĕршывăн тÿрĕ хĕрне, вăй большевика, аслă Ленин тата халăхсен генилĕ çулпуçĕ Сталин соратникне—Çутĕç Халăх Комиссарĕн заместителне—Надежда Константиновна Крупскайа йулташа тăратрĕ. Епĕ Крупскайа йулташ кандидатуришĕн сасăлама чĕнетĕп“.

Н. К. Крупскайа йулташ пысăк та усă ответлă сăмахĕнче канашлура пухăннисене хăйне хисеп тунăшăн тав туса суйлавçăсем шаннине тавăрма сăмах панă.

Канашлура пысăк хаваслăхпа халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

Йарославль облăçĕнчи Галич хулинче суйлав умĕнхи митинг пулса иртнĕ. Вăл митингра вуникĕ пин çын пулнă. Митингра унта пынă Галич суйлав округĕ тăрăх Союз Советне депутата суйлама баллотировкăра тăма регистрациленĕ Совет Союзĕн Геройĕ М. М. Громов йулташ сăмах тухса каланă.

Громов йулташ çапла каланă:

„Çирĕм çул кайала пирĕн çĕршыв тĕттĕм те чухăн пулнă, халĕ вăл пултарулă, пĕтĕм тĕнчере малта тăракан державă, а пирĕн халăх—тĕнчере чи телейли пулса тăрать. Пирĕн канăç, ĕçлĕх, вĕренÿ прави паракан Сталинла Конституци пур. Пирĕн Хĕрлĕ çар нихăçанхи пек те мар вăйлă хĕçпăшалланнă. Пирĕн çавăн пек техникă пур, вăл техникăпа епĕр пур тăшмана та, вăл пирĕн çĕршыв çине тапăнма тăрать пулсан, çапса салатма пултаратпăр. Пирĕн пĕтĕм тĕнчере чи вăйлă авиаци пур.

Фашисăм агенчĕсем—троцкисла бухаринла ылханлă мерзавцăсем, тăван çĕршыва сутакан ирсĕр тăшмансем сутăнчăклă диверсилĕ ĕçсем турĕç пулин те, пирĕн çитĕнÿсем питĕ пысăк. Тăван çĕршыв пирĕн аслă Сталин йертсе пынипе çирĕппĕн малала пырать“.

(ТАСС).

Ташкентри 20 пин çынлă митинг

Нойабĕрĕн 18-мĕшĕнче Ташкентра ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленес майпа пысăк митинг пулса иртнĕ. Митингра Ташкент узĕлĕнчи чукунçул работникĕсем 20 пин çын пулнă.

„Лазар Моисейевич Каганович партишĕн, пĕтĕм пирĕн çĕршывшăн калама çук пысăк ĕçсем туни çинчен каласа пама сăмахсем те çук,—тенĕ йатлă стахановец, орденоносец машинис Йемцов йулташ.—Каганович йулташ ĕçĕн пур участкисенче те йертсе пырассин большевикла образецне кăтартать. Çавăнпа та ерĕ декабĕрĕн 12-мĕшĕнче хам саса уншăн паратăп“.

Митингра пулнисем хавасланса алă çупса халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тата унăн тÿрĕ соратникĕ—Ташкент—Ленински суйлав округĕ тăрăх тăратнă Союз Советне суйламали кандидат Каганович йулташ патне саламлă телеграммă йама йышăннă.

(ТАСС).

Агитаторсем çул çинчи будкăсенче

БЕЛГОРОД, нойабĕрĕн 16-мĕш (ТАСС). Белгород станцинче суйлав саккунне йлнантаракан комсомолецсен бригади тунă. Вăл бригадă хăйĕн çулне Харьковран пуçласа, çул çинчи пĕтĕм будкăсене кĕрсе, 73 километр хушши çуран утса тухнă. Старков, Григорйев тата Шевченко комсомолец-агитаторсем суйлав саккунĕпе Сталинла Конституци çинчен йлнантарнă.

Агитаци бригади çул çинчи 54 будкăра 156 суйлавçăпа каласусем туса иртернĕ. Комсомолецсене пур çĕрте те ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ тата пысăк тимлĕхпе итленĕ.

Çитес кунсенчех çул çинче ĕçлекен агитатăрсен çĕнĕ бригадисем çула тухса кайаççĕ.

Крепилшчик Соловйов рекорчĕ

Нормăна 4 000 процент тултарнă

СТАЛИНО, 16/XI (ТАСС). „Дзержинскуголь“ трестăн Артем йачĕпе тăракан шахтинчи крепилшчик Иван Соловйов йулташ пит пысăк рекорд тунă. Вăл, „Сорока—Запад“ текен участкăра ĕçлесе (кăмрăк катнă вырăна йăвăçпа тĕреклесе пырать), сменăра 95 рамă лартнă, нормă тăрăх метр çурă тăршшĕ тĕреклемеле пулсан, 60 метр тăршшĕ тĕреклене.

Çапла вăл заданине тăватă пин процент тултарнă.

Çакăн пек пысăк рекорд тума Соловйов йулташа пилек çынран тăракан бригадă пулăшнă. Бригадăри рабочисем рамăсене лартма шăтăксем чавнă тата тăпра тасатса пынă. Участка начальникĕ Кавальов йулташ тĕреклеме кирлĕ йăваçа çителеклĕ хатĕрлесе панă.

Испанири Коммунисла парти Тĕп Комитечĕн пленумĕнче

Барселонăран пĕлтернĕ тăрăх, Испанири коммунисла партин Тĕп Комитет пленумĕн иккĕмĕш ларувĕнче Мадрид провинцинчи коммунисла организаци секретарĕ Антон пысăк сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Испани халăхĕн тăшманĕсемпе — контрреволюционерсемпе — троцкиссемпе татăкла кĕрешме кирли çинче уйрăмăнах чарăнса тăнă.

Антон фактсемпе Франкон тата фашисла интервентсен тÿрĕ агенчĕсем пулса тăракан троцкиссене çапса хунă. Республикă влаçĕсем, тенĕ вăл, документсем тăрăх, троцкиссем пăлхавçăсене вальли кирлĕ вырăнсене палла туса Мадрид планĕсене туса панă, тесе шутлаççĕ. Контрреволюцилĕ троцкисла организаци „ПОУМ“ пĕтĕм руководителĕсем фашисла Германипе тата Италипе тÿррĕмĕн çыхăннă.

Каталонири пĕрлешÿлĕ социалисла парти генеральнăй секретарĕ Комореа хăйĕн сăмахĕнче тылри лару-тăру палăрмалах аванланни çинчен каланă. Профсойузсен организацийĕ йалта хресченсен пурнăçĕшĕн лайăх ĕçсем тунă. Каталонири контрреволюционерсем—троцкиссем ирсĕр ĕçсем тунине çапса хуçса, Кокорера Каталони пĕрлешÿлĕ социалисăмла парти троцкисла „ПОУМ“-па кĕрешме йышăнна мерăсем çинчен пĕлтернĕ.

Испанири коммунисла партин Тĕп Комитечĕн членĕ Михе, Негрин правительстви ĕçленипе çĕршывăн економикăлă пурнăçĕ тата, уйрăмăн илсен, рабочи класăн пурнăçĕ аванланни çинчен палла тунă. Михе рабочисене производствă хăвăртлăхĕсене ÿстерме чĕннĕ.

Франциири коммунисен парти представителĕ Монмуссо саламлă сăмах тухса каланă. Вăл Франциири коммунисен партийĕ организацилĕнĕ Испани халăхне хута кĕмели кампани çинчен каласа панă.

Ларура социалисла партин саламлă çырăвне вуланă. Унта коммунисла партин Тĕп Комитечĕ Испани пролетариачĕн пĕрлĕхлĕ партине хăвăртрах тăвассине ĕçлес шанчăк курăнать. Саламлă çырăва вуланă чухне нумай вăхăт хушши хавасланса кăшкăрса алă çупнă тата „Интернационал“ йурланă.

(ТАСС).

Испани правителствин протесĕ

ЛОНДОН, нойабĕрĕн 17-мĕш (ТАСС). Рейтер агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонри Испани посольстви Англин йутçĕршыв ĕçĕсен министерствине Англи правителстви пăлхавçăсен влаçĕсем çумне хăйĕн агенчĕсене лартнă майĕне Испани правителстви хирĕçленĕ нотине панă. Англи правителствин çак акти, тенĕ нотăра, саккунлă Испани правителствине хирĕç тăнă пăлхавçăсемпе тĕрлĕ официаллă çыхăну тытма йышăннă политикăла килĕшнине пĕлтерет.

Алексей Иванович Стецкий—ПСК(б)П Тĕпкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕн заведуйушчийĕ. Ăна Шупашкар Округ Суйлав комиççийĕ Национальнăçсен Советне депутата суйлама регистрациленĕ.

★ ★ ★

Национальнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Алексей Иванович Стецкий

Шупашкар хула Суйлав Округĕ № 496

Шупашкарти типографи рабочийĕсем инженерсем, служащисем тата Чăваш республикĕнчи пичет работникĕсен пухувĕ Шупашкар суйлав округĕнчен Национальнăçсен Советне депутата суйлама ПСК(б)П Тĕпкомĕн парти пропагандипе агитаци пайĕн заведуйушчине—Алексей Иванович Стецкий йулташа палăртрĕç.

Алексей Иванович Стецкий 1896 çулта çуралнă.

Алексей Иванович Стецкий çамрăклах хăйĕн пурнăçне рабочи класшăн, ĕçхалăх массисене капитал пусмăрĕнчен хăтарас ĕçе парать.

1915 çулта империалисăмлă вăрçă çав тери хĕрсе кайса, империалисăм пĕтĕм тĕнчене вĕлерÿпе чикĕшÿ вутне алсе кĕнĕ çулта Алексей Иванович Стецкий Петроградра, Ленинпа Сталин йертсе пынă большевиксен партине кĕрет. Выборг районĕнчи большевиксен организацийĕнче ĕçлет, ун чухне çав районта питĕ пысăк промышленнăçлă предприятисем пулнă. Розенгранц (халĕ Красный Выборжец) заводĕнчи тата ĕлĕкхи Феникс заводĕнчи рабочи большевиксен кружокĕсене йертсе пынă.

1916 çулта Алексей Иванович Стецкий большевиксен Петербургри комитечĕн членĕ пулнă. Революцилĕ митингсемпе демонстрацисем организацилес тĕлĕшпе ĕçленĕ. Çав ĕçсемшĕн Алексей Иванович Стецкийе 1916 çулта патша правителстви жандармĕсем арĕсленĕ, вара тĕрмере икĕ уйăх ларнă хыççăн, ăна Петроградран кăларса йанă.

Революци вăхăтĕнче Алексей Иванович Стецкий каллех Петроградa таврăннă. „Старый Лесснер“ заводăн завод комитечĕн секретарĕ тата большевиксен Выборг районĕнчи район комитечĕн членĕ пулса ĕçленĕ. Петроград комитечĕн агитаторĕ пулса ĕçсыннисен пухувĕсенче большевиксен партийĕн çулĕпе, Совет влаçĕ тăвас мар, ĕçсыннисемшĕн пурнишĕн те çăкăр, хресченсемшĕн çĕр кĕрешсе илес çулĕпе тытса пынă.

Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци вăхăтĕнче Алексей Иванович Стецкий рйадовой красногвардеец пулса, ес-ер Керенскийпе генерал Краснов Петроград çине казаксем илсе пынă чухне, Петроград патĕнче çапăçать.

Нимĕçсем наступлени тунă вăхăтра Алексей Иванович Стецкийе, Выборг районĕнчи ытти йулташсемпе пĕрле мобилизацилесе, Йекатеринослава (хальхи Днепропетровска) унти красноармейецсен штабне йанă. Унтан Колчака хирĕç çапăçакан 3-мĕш çарта политработник пулса ĕçленĕ.

1919 çулта Алексей Иванович Стецкийе, Çар академийне кăшт вĕреннĕ хыççăн, Деникина хирĕç кĕрешме кăнтăр йенчи фронтри 42-мĕш дивизийе йанă. Кунта вăл Деникина пĕтерме çĕмĕрсе тăкиччене çапăçнă. Унтан Махнопан бандитла отрйачĕсене пĕтерме çĕрте хутшăнса ĕçленĕ.

Çапла хăйĕн кăкăрĕпе тăрса, Алексей Иванович Стецкий рабочи клас интересĕсене граждан вăрçи фрончĕсенче хÿтĕленĕ.

Граждан вăрçи пĕтнĕ хыççăн Алексей Иванович Стецкийе демобилизациленĕ, вăл вара политçут учрежденийĕсенче ĕçленĕ тата вĕреннĕ.

1924 çулта пирĕн партин 13-мĕш сĕесĕнче Алексей Иванович Стецкийе Тĕп Контроль Комиççи членне суйланă. Вăл Тĕп Контроль Комиççинче—Рабочисемпе Хресченсен инспекцинче (ЦКК—РКИ) Куйбышев йулташ йертсе пынипе ĕçлесе, пирĕн партин тата халăх тăшманĕсене хирĕç, пирĕн Ленин—Сталин чаплă партийĕн ĕречĕсен тасалăхĕшĕн питĕ хытă кĕрешнĕ. 1926 çулта Алексей Иванович Стецкий Ленинградра, парти ĕçĕнче, Киров йулташ йертсе пынипе ĕçленĕ. Кунта вăл партин Ленинград Обкомĕн секретариат членĕ тата Обком пайĕн заведуйушчийĕ пулнă. Киров йулташ йертсе пынипе вăл, троцкисла-зиновйевла бандитсен йулашкийĕсене хирĕç питĕ вăйлă кĕрешнĕ, Ленинград организацине çав ирсĕрсенчен тасатас тĕлĕшпе питĕ вăйлă ĕçленĕ.

1927 çулта Пĕтĕмсойузла Коммунисен (большевиксен) партин XV сĕесĕнче Алексей Иванович Стецкийе ПСК(б)П Тĕп Комитетăн членне суйланă.

1929 çулăн вĕçĕнче вăл ПСК(б)П Тĕп Комитетăн парти пропагандипе агитаци пайĕн заведуйушчийĕ пулса ĕçлеме тытăннă. Вăл ПСК(б)П Тĕпкомĕн Оргбюро членĕ тата „Большевик“ журналăн редакторĕ.

Çак çулсенче Алексей Иванович Стецкий, пирĕн партин Тĕп Комитечĕн парти пропагандипе агитаци пайĕн пуçĕнче тăрса, тата „Большевик“ журнала редакцилесе, Аслă Сталин йертсе пынипе, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, Маркс—Енгельс—Ленин—Сталин вĕрентĕвĕн тасалăхĕшĕн пĕр ывăнми кĕрешрĕ, кĕрешет те. Вăл марксисăм-ленинисăма ывăна пĕлми пропагандăлать, марксисăм-ленинисăм вĕрентĕвĕн чи кирлĕ, чи паха положенийĕсене йлнантарса парать.

Вăл „История гражданской войны в СССР“ кĕнекене çыраканнисенчен пĕри. Вăл „Социалисăмпа коммунисăм“, „ССР Союзĕнче класĕсене пĕтерни çинчен“ йатлă статйасен тата ытти произведенисен автăрĕ.

Вăл—Октябĕрти Социалисăмлă Аслă революци 20 çул тултарнă тĕле кăларнă „Пирĕн тăван çĕршыв“, „ССР Союзĕ тата капиталисăмлă çĕршывсем“ йатлă питĕ те лайăх кĕнекесен тата ытти лайăх кĕнекесен редакторĕсенчен пĕри.

Алексей Иванович Стецкий совет халăхĕн тивĕçлĕ ывăлĕ, пирĕн çĕршывра коммунисăм тăвас кĕрешÿре Сталин йулташăн шанчăклă вĕренекенĕ, унăн чи çывăх помошникĕ.

РСФСР-чен Горький суйлав округĕ тăрăх Националђнăçсен Советне суйлама палăртнă кандидат

Валерий Павлович Чкалов



1. Стена çумĕнче пит илемлĕ фотографи: августри пĕр хĕвеллĕ кун аэродром тăрăх Сталин, Чкалов, Байдуков утса пыраççĕ. Сталинпа Чкалов пĕрпĕрин çине пăхаççĕ, калаçаççĕ, кулаççĕ.

Кĕтесре йалав тăрать. Вăл—сталинла соколсен тройкине (Совет Союзĕн Геройĕсене—Чкалова, Байдукова, Беђакова) йутçĕршывсенчи рабочисем панă парне. Сĕтел çинче чапа тухнă хĕрлĕ çунатлă самођотăн моделĕ.

Ирпе. Валерий Павлович сĕтел хушшинче ларать, пит нумай килнĕ корреспонденцине пăхса тухать: суйлав округĕсенчен килнĕ теллеграммăсене, Чкалова Аслă Совет депутатне суйлама кандидата палăртни çинчен пĕлтернисене; тата Чкалов патне Совет Союзĕн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен нихăçан кĕтмен ыйтусем тăрăх та çырусем нумай килеççĕ.

Валерий Павлович, хăй патне çыру йанă çынсемпе каласнă пек, ăшшăн кулать. Вăл, сĕтел хушшинчен тăрса, кантăкран пăхать. Мускав çинче кĕрхи хĕвел. Çанталăк—вĕçме йурăхлă. Ђотчик айалала анса урама тухать, „М 1“ (автомашинă) руђне тытса ларать те аэродром çине вĕçтерет. Тепĕр çур сехетрен вăл, тин çуралнă самођотăн пахалăхне тĕрĕслеме, çӳлеле вĕçсе хăпарать....

Мускав çинче кашни кулленех самођотсем вĕçеççĕ. Вĕсене çамрăк ђотчиксем, нумай вăхăт хушши вĕçекен ђотчиксем тата Совет Союзĕн Геройĕсем те тытса пыраççĕ. Вĕсен хисепĕнче Чкалов та пур.

Кам ха вăл Чкалов? Валерий Павлович хăй çинчен каласа кăтартма йуратмасть. Вăл кĕскен калать:

— Епĕ ĕçхалăхĕн чăн-чăн ывăлĕ. Василйево йалĕнчи котелщик ывăлĕ. Çамрăклах Атăл çине ĕçлеме кайнă. Камнечерпалкă çинче, буксир çинче, унтан пассажир пароходĕ çинче те ĕçленĕ. 1919 çулта хам ирĕкпе Хĕрлĕ çара кайнă. Авиаци шкулне вĕренме кĕнĕ. Ђотчик пулса тăнă. Йапăх мар вĕçнĕ. Испытателе куçнă. Çапла манăн пурнăç—каласа пĕтрĕ те. 1935 çулхи май уйăхĕнчен, епĕ Сталин йулташпа курнăçса каласнă хыççăн, манăн пурнăç труках улшăнчĕ.

Чкаловăн чĕрене хаваслăхпа хумхантаракан пурнăçне пĕтĕм çĕршыв пĕлсе тăрать. Унăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен чаплă документсенче çырса хунă. Çав документсене аса илер ĕнтĕ.

2. 1935 çулхи майăн 1-мĕшĕнче Хĕрлĕ плошчĕд тĕлĕнче пулнă сывлăшри парадра чи малта пынă хăвăрт вĕçекен машинăна ђотчик-испытател В. П. Чкалов тытса пынă. Ку машин испытател вĕçсе сăнаса пăхнă машинăсен аллă пиллĕкĕмĕш системи пулнă.

Майăн 2-мĕшĕнче Мускаври тĕп аэродрома Сталин, Молотов, Каганович, Орджоникидзе, Чубарь йулташсем пынă.

Хăвăрт вĕçекен машинăсемпе вĕçсе кăтартас умĕн, Ворошилов йулташ, ђотчик-испытател Чкалова халăхсен çулпуçĕпе Сталин йулташпа паллаштарнă. Сталин ђотчикрен ыйтнă:

— Мĕншĕн-ха есĕр парашутпа усă курмастăр, йаланах машинăна çăлса хăварма тăрăшатăр?

— Машинă хаклă тăрать, Сталин йулташ,—тенĕ Чкалов.—Епĕ сăнавлă хаклă машинăсем çинче вĕçетĕп, вĕсене çĕмĕрес килмест. Машинăна, çав майпа вара хамăра та çăлса хăварма тăрăшатпăр. Сăнав тунă чухне пуринчен ытла машинăна çĕр çине илсе çитересси çинчен шухăшлатăн.

Сталин, ăшшăн кулса, парашутпа обйазателлĕ усă курас пулать, тенĕ. Унтан вăл çапла каланă.

— Сирĕн пурнăç пирĕншĕн кирек мĕнле машинăран та хаклăрах...

Çак пĕтĕм пурнăç тăршшипе асăнмалăх калаçу хыççăн, Чкалов икĕ хут, партипе правителства руководителĕсем умĕнче, тĕрлĕ системăлă машинăсем çинче вĕçнĕ. Вăл, хумханса тата хаваслланса, чи сложнай фигурăсем туса кăтартнă: „иммельман“, „бочка“, „мертвая петля“ текеннисене; машинăна ӳпне çавăрса, айалала хăвăрт вĕçнĕ, унтан çӳлеле хăвăрт вĕçнĕ. Вăл пĕлнĕ: унăн вĕçевне Сталин пăхса тăрать, ку вăл Чкалова хавхалантарнă.

1935 çулхи майăн 5-мĕшĕнче ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ постановлени йышăннă:

„Ђотчик-испытател Валерий Павлович Чкалова, çĕнĕ конструкциллĕ самођотсене сăнанă чухне пĕр хут çеç мар пит пысăк хăйулăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, Ленин орденĕпе наградăлас“.

Чкалов—орденоносец. Унăн фотографине çĕршывăн пур хаçачĕсенче те пекех пичетлесе кăларнă.

Унăн ĕçне çулпуçĕ ырланă хыççăн, аслă наградă илнĕ хыççăн, ђотчик-испытател унччен пекех çĕнĕ самођотсене сăнанă тата вăл—çĕршыва, партине, Сталина аслă наградăшăн мĕнпе ответлес-ши? тесе шухăшланă.

Часах пит пысăк ĕçĕн планĕ пулсе çитнĕ.

3. 1936 çулти ийулĕн 20-мĕшĕнче, ирхине 5 сехет те 45 минутра, Мускав çывăхĕнчи аэродромра, Шчелково çывăхĕнче Мускав—Баренцево тинĕсĕ—Франц Иосиф çĕрĕ—Челускин сăмсалăхĕ—Камчаткă çинчи Петропавловск—Амур çинчи Николайевск инçе маршрутпа вĕçмели старта панă. Самођот екипажĕ: пĕрремĕш пилот—Менжински йачĕпе тăракан заводри ђотчик-испытател Чкалов йулташ, иккĕмĕш пилот—Горбунов йачĕпе тăракан заводри ђотчик-испытател Байдуков йулташ, штурман—Беђаков йулташ.

„Пурте йĕркелĕ!“

Вунвиçĕ сехет те 45 минутран Арктикăн сивĕ пăрĕсем çинчен ниçта анса лармасăр вĕçекен самођот екипажĕ саламлă телеграммă илнĕ:

„Чкалова, Байдукова, Беђакова. Пĕтĕм çĕршыв сирĕн вĕçеве сăнать. Сирĕн çĕнтерӳ Совет çĕршывĕн çĕнтерĕвĕ пулать. Сире ӳсĕм тума сунатпăр. Сирĕн аллăрсене хытă чăмăртатпăр.

Сталин, Молотов, Орджоникидзе, Димитров“.

Сывлăшра 56 сехет те 20 минут хушши пулса, паттăр екипаж 9374 километр вĕçнĕ, вĕсенчен 5000 километрне Баренцево тинĕсĕ, Çурçĕрти Пăрла океан, Охотск тинĕсĕ çинчен вĕçнĕ. Циклонсемпе тата тĕтрепе, самођот пăрланнипе кĕрешсе шутсăр пысăк йăварлăхсене çĕнтерсе, чылай вăхăт хушши 4000 метр çуллĕшĕнче вĕçсе, ийулĕн 22-мĕшĕнче 13 сехет те 45 минутра Чкалов йулташ питĕ тĕтрелĕ çанталăкра сыран хĕрринчи пĕр пĕчĕк утрав—„Удд“ çине питĕ лайăх анса ларнă.

Тăван çĕршыв, тĕнче, пĕтĕм етемлĕх совет ђотчикĕсен, сталинла питомецăсен халиччен пулман паттăр вĕçевĕпе, вĕсен паттăрлăхĕпе çĕкленнĕ, хавхаланнă. „Хăйулă вĕçевĕн геройĕсем—Чкалов, Байдуков, Беђаков хăйсене ĕмĕр манми мухтавлăх турĕç“ тенĕ „Правда“ хаçатăн аншлагĕ.

Самођот екипажĕшĕн чи хакли Сталин, Молотов, Орджоникидзе, Ворошилов тата Жданов йулташсен саламĕ пулнă. Çав саламра вĕсем çапла çырнă:

„Пит те чаплă вĕçеве ăнăçулă вĕçленипе тăванлă салам тата хĕрӳлĕн ырă суннине йышăнăр.

Сирĕн паттăрлăхпа, хăйулăхпа, чăтăмлăхпа, çине тăнипе, мастĕрлăхпа мухтанатпăр“.

Салам çине ответлесе, ђотчиксем хăйсен çитĕнӳне, вĕçевĕн маршрутне туса паракан, пилотсемшĕн тăрăшакан Сталин йулташ йертсе пынипе туни çинчен каласа панă.

1936 çулти ийулĕн 24-мĕшĕнче ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çакăн пек постановлени йышăннă.

„Совет Союзĕн геройĕн йачĕ çинчен Положени“ тăрăх В. П. Чкалова—екипаж командирне, Г. Ф. Байдукова—иккĕмĕш пилота, А. Ф. Беђакова—штурмана Совет Союзĕн Геройĕсен йачĕсене парас“.

Çак пысăк наградăшăн Чкалов йулташ çыру çырса ответленĕ:

„Хаклă йулташ Сталин! Самођот екипажĕ Сире тата Совет правителствине пире пысăк наградă панăшăн ырă сунать. Мускавран вĕçсе епĕ маршрута Сирĕн йата: „Сталинла маршрут“ тесе патăм. Екипаж хастарлă, малала вĕçме хатĕр“.

Екипаж столицăна таврăнни питĕ пысăк хавас пулнă. Хĕрлĕ çуначĕсем çине „Сталинла маршрут“ тесе çырнă кайăка Çĕпĕрти хуласенчи аэродромсенче пиншер çын кĕтсе илнĕ, герой-ђотчиксене чечексемпе витнĕ.

1936 çулти августăн 10-мĕшĕнче, 16 сехет те 16 минутра Шчелковски аэродромĕ çине йумахри пек самођот анса ларнă. Геройсене пĕтĕм Мускав кĕтсе илнĕ. Аэродрома Сталин, Орджоникидзе, Ворошилов, Каганович, Чубарь йулташсем пынă.

Сталин тата партипе правителствă руководителĕсем тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсене хĕрӳлĕ чуп тунă. Орджоникидзе йулташ хăйĕн сăмахĕнче „рабочи ывăлĕн, Чкалов йулташăн, пур йăварлăхсене çĕнтерне пысăк паттăрлăх, пысăк вăй ăçтан тупăннă?“ тесе ыйтнă та, çапла ответленĕ: „Çав паттăрлăхпа пысăк вăйа вĕсене пирĕн парти—Ленин—Сталин партийĕ панă“.

„Пирĕн геройсем ӳтпе те йунпа та пирĕн аслă халăхăн“ тесе каланă Ворошилов йулташ хăйĕн сăмахĕнче.

Саламсене ответлесе Валерий Павлович çапла каланă:

„Сталин йулташ, епĕр пĕччен мар, а епĕр пиншер çын, вĕсем сирĕн маршрута, Сталин йулташ, пурнăçа кĕртме пултараççĕ тесе калас килет манăн кунта“.

Мускава таврăннă самођот екипажĕ Сталин йулташ патне йанă çыруне çак сăмахсемпе пĕтернĕ:

„Пирĕн пурнăç йăлтах халăха тивет. Пур чухне те, кирек ăçта та Сталинла саманара пурăнакан мĕлйун çынсем çапăçса илнĕ аслă телейе хамăрăн йунпа сыхлама хатĕр“.

1936 çулти августăн 12-мĕшĕнче В. П. Чкалов йулташ ПСК(б)П Тĕпкомне зайавлени панă.

„Мана Ленин—Сталин аслă партин членне илме ыйтатăп.

Парти ĕçĕшĕн, çулпуç, учител аслă Сталин кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăйа пама пулатăп“.

1936 çулти августăн 13-мĕшĕнче ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Удд утравне Чкалов утравĕ тăвасси çинчен постановлени йышăнна.

Чкалов йулташ 1936 çулти августăн 17-мĕшĕнче ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕн ларăвĕнче иккĕмĕш Ленин орденĕ илсе çапла каланă:

— Çакăн пек пысăк наградă илсе, партипе правителствăна ырă сунатăп, екипаж йачĕпе „Сталинла маршрут“ кăçал мар пулин те, çитес çул Çурçĕр пођусĕ урлă выртать.

Çакăн пек пĕр вĕçеврен тепĕр вĕçев патнеле выртакан çул.

4. Хамăр çĕршыв тăрăх çӳрени, Сочире канни, тĕнчери авиаци выставкине Парижа хĕрлĕ çунатлă кайăк çинче вĕçсе кайни, Çурçĕр пођусĕ урлă вĕçсе кайма тĕплĕн хатĕрленни—çаксемпе тулать геройăн вăхăчĕ.

1937 ç. майăн 25-мĕшĕнче Чкаловпа Байдуков йулташсем Кремĕлте Сталин йулташ, партипе правителствă руководителĕсем умĕнче хăйсен çĕнĕ вĕçевĕн планĕсем çинчен каласа панă. Çак историлĕ калаçу пирки Байдуков йулташ çапла каласа парать:

„Иосиф Виссарионович, пирĕн çине пăхкаласа, ăшшăн кулса ыйтрĕ:

— Каллех сире çĕр çитмест-и? Каллех вĕçме шутлатри?

Çапла, Сталин йулташ,—терĕ Чкалов,—вăхăт çывхарать, Çурçĕр пођусĕ урлă вĕçсе каймашкăн правителстварăн ирĕк пама ыйтма килтĕмĕр.

Сĕтел хушшинче ларакансем пурте пирĕн çине пăхаççĕ, кулаççĕ.

— Ăçта есĕр вĕçес тетĕр? Кам ун çинчен каласа парать?—тесе ыйтрĕ Сталин йулташ.

Чкалов пирĕн вĕçев планĕсем çинчен тӳллеккĕн каласа кăтартрĕ. Çурçĕр пођусĕ урлă Америкăна вĕçмешкĕн ирĕк пама ыйтрĕ.

— Екипаж пирĕн—пĕлтĕрхи тройкă,—терĕ Чкалов—вĕçме хатĕр. Самођот та пирĕн хатĕр.

Епĕр хамăр мĕн калас тенине пĕтĕмпех каласа пĕтерне хыççăн Сталин йулташ хăйĕн соратникĕсенчен ыйтрĕ:

— Ну мĕнле, вĕçме ирĕк парăпăр и?

Молотов, Ворошилов, Каганович тата Йежов йулташсем тӳррех Сталин шухăшне ырларĕç, ĕçе тапса пачĕç“.

Ийунĕн 19-мĕшĕнче истори халиччен курман вĕçев—ниçта анса лармасăр Мускав—Çурçĕр пођусĕ—Çурçĕр Америкă маршручĕпе вĕçев пуçланни çинчен пĕтĕм тĕнче пĕлчĕ.

„Тăван çĕршыв çинчен, Сталин йулташ çинчен шухăшланипе вăй, хастарлăх, хăйулăх илетпĕр:—тесе çырнă ђотчиксем Мускавран уйăрăлса.

Каллах самођот бортĕнчен çунатлă сăмахсем илтĕнчĕç.

„Пурте йĕркелĕ!

Ийунĕн 19-мĕшĕнче, 10 сехет те 25 минутра екипаж телерграммă пачĕ:

„Мускав. Кремђ Сталина. Пођус кайа йулчĕ. Пырса тĕкенмен пођус тăрăх пыратпăр. Сирĕн заданине пурнăçа кĕртессишĕн хавасланатпăр. Екипаж хăйне лайăх тытать. Салам“

Ийунĕн 20-мĕшĕнче, 19 сехет те 30 минутра, 63 сехет те 23 минут хушши сывлăшра пулса, 10.000 километр вĕçсе кайса Çурçĕр Америкăри Портланд çывăхĕнчи Баранс аэродромĕ çине анса ларнă.

Совет богатырĕсем икĕ материкечи кĕске çулпа çыхăнтарса, етемлĕх ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне пурнăçа кĕртрĕç.

Мускавран Америка, Портланд хулине, самођот екипажĕ патне çапла телеграммă парать:

„Чи пысăк çĕнтерӳ тунă йатпа Сире сывлăх сунса, хĕрӳлĕ саламлатпăр.

Мускаврач Çĕрçĕр пођусĕ урлă Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене ниçта анса лармасăр иртте-рекен паттăр вĕçеве ăнăçлăн вĕçлени пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕççыннисен кăмăлĕсене йратупа тата хаваслăхпа тултарать.

Тума тĕл тытнă ĕçре чăрмавсем пĕлмен паттăр та хăйулă совет ђотчикĕсемпе çĕкленсе савăнатпăр.

Сире ыталатпăр тата Сирĕн аллăрсене чăмăртатпăр.

И. Сталин, В. Молотов, К. Ворошилов, Л. Каганович, М. Калинин, А. Жданов, Н. Йежов, А. Микойан, А. Андрейев“.

Пирĕн çĕршыв, Америка, пĕтĕм тĕнче Чкалова тата унăн чаплă йулташĕсене савса алă çупнă.

Америка тăрăх çӳрени, Пĕрлешӳлĕ Штатсен тĕрлĕрен хулисенче кăмăллă йышăннисем, митингсем, Шурă çуртра президент Рузвеђт йышăнни. Пур çĕрте те советсен харсăр ђотчикĕсенчен тĕлĕннĕ. Анчах ђотчиксем хăйсем çинчен каламан. Вĕсем тăван çĕршыв çинчен, Сталин çинчен каланă. Вĕçевпе тăван çĕршыва мухтава кăларса, Чкалов Америкă гражданĕсем умĕнче çапла каланă:

— Пођус урлă мĕн пур пирĕн паттăр çĕршыв вĕçнĕ, епĕр машиниссем кăна пулнă.

Тăван çĕршыва таврăннă чухне те герой-ђотчиксем Йевропă тăрăх вĕçсе çавăнтан кайа мар тĕлĕнмеле çул хывнă.

Ийулĕн 26-мĕшĕнче вĕсене тăван Мускав кĕтсе илнĕ. Чи чаплă, мухтавлă ывăлĕсене кĕтсе илнĕ пек йышăннă вĕсене. Белорусски вокзалта Валерий Павлович çапла каланă:

— Нимĕнле чăрмавсем те, нимĕнле сивĕсем те, нимĕнле çилтăман та, нимĕнле пăрланни те пире чарма пултараймарĕç. Сталин путьовкипе, Сталин маршручĕ çинче чарăнма та, айккинеле пăрăнкалама та йурамасть. Чăн, пирĕн екипаж ун пек тума хăнăхман, ун пек тума пĕлмен те.

Çак кунах каçхине Чкалов, Байдуков тата Беђаков йулташсене Кремĕлте Сталин йулташ тата унăн çывăх тусĕсем йышăннă.

Ворошилов йулташ Чкалова полковник йатне пама приказ парать.

Августăн 9-мĕшĕнче В. П. Чкалова, Мускав—Çурçĕр пођусĕ—Çурçĕрти Америксен Штатне пирвайхи хут геройла вĕçсе тухнă ытти çынсене те ССР Союзĕн Тĕпĕçтăвкомĕ Хĕрлĕ Йалав орденĕпе наградăлать.

Наградă панине ответлесе Сталин йулташ патне Валерий Чкалов çапла çырнă:

„Сирĕн кирек мĕнле заданине, партипе правителствăн кирек мĕнле заданине те тултарма пултарапăр, тесе сăмах паратăп. Манăн йулташсем Байдуковпа Беђаков та çапла шутлаççĕ пулĕ, тетĕп. Епĕ хам ман сылтăм аллă самођот управлени штурвалне тытма, куçĕм çĕре курма пултаричен вĕçме пулатăп“.

Сентаберĕн 27-мĕшĕнче, ССР Союзĕн Тĕпĕçтăвком президиум ларăвĕнче, Чкалов йулташ Хĕрлĕ Йалав орденне илнĕ чухне каланă:

„Сире çакăн çинчен ĕнентерме ирĕк парăр: екипаж халиччен тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармасть, вăл çитес çывăх вăхăтрах хамăрăн тăван çĕршыва тата тепĕр хут мухтава кăларма тăрăшать“.

Валерий Павлович Чкаловăн кăкăрне Союзăн виçĕ орден илемлетет. Виçĕ çулта—виçĕ орден!

5. Валерий Павлович халăхпа пит тачăн çыхăнса тăрать. Вăл хăй çуралнă вырăна, Атăла пĕтĕм чунтан йуратать. Василйевă посолкăна вăл йуратнă пек йуратни сахал тĕл пулать. Хăйĕн земђакĕсем патĕнче вăл чач-часах хăналанать.

Чи малтанхи чаплă вĕçев умĕн, Валерий Павлович, машинăна тата хăйне тĕрĕсленĕ чух, Атăл çине вĕçсе килчĕ. Унăн хĕрлĕ çунатлă кайăкĕ Василйевă çинче вĕçсе ункă тунă хыççăн, Мускав йеннеле вĕçсе кайрĕ.

Сталинла маршрут тăрăх вĕçсе вырăна çитнĕ хыççăн, Валерий Павлович хăй çуралнă тăван çĕршыва пырса кайрĕ. Кунга вара „Двигатель революции“ заводри рабочисемпе тата учителсен съезчĕн делегачĕсемпе манмала мар тĕлпулу пулса иртрĕ.

Париж хулине авиаци выставкине кайас умĕн те Чкалов каллех Василйевăна килсе кайрĕ. Василйевăри çамрăксенчен вăл пĕр ушкăн организацилесе вĕсене аероклуба вĕренме йачĕ.

— Ман земђаксенчен пирĕн Çĕршывăн геройĕсем тăтах та пулмала. Вĕренĕр, ачасем, вăй-хала хĕрхенсе ан тăрăр,—терĕ вăл çамрăксене.

Çак çул, Америкăран таврăнсан, Чкалов чи малтанах каллех хăйĕн земђакĕсем патне килчĕ. Августăн 9-мĕшĕнче ăна Горькири ĕççыннисем кĕтсе илчĕç. Пилĕк кун хушши вăл докладсемпе тухса, рабочисемпе калаçса заводсем тăрăх çӳрерĕ.

— Епĕ, есĕр ӳстернĕскер, Сталин йулташ заданине мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен сирĕн умра отчот тăватăп,—тетчĕ вăл рабочисен митингĕсенче.

1937 çулти августăн 28-мĕшĕнче Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Василйево посолкăна Чкаловск, Василйевск районне—Чкаловск районĕ тесе улăштарнă. Çавăн хыççăн Чкаловскăра чăннипех халăх праçникĕ пулса иртрĕ. Çав праçникре тухса каланă чух, Валерий Павлович çапла каларĕ:

— Есĕр шаннине пĕр ĕçре те вараламастăп, тесе епĕ сирĕн умра тупа тăватăп! Епĕ хам йулташсемпе пĕрле çеç мар Сталинла маршрут тăвăп, тесе тупа тăватăп!

Герой тупа тунине земђаксем ĕненеççĕ. Вĕсем йуратаççĕ, чысласçĕ ăна, амăшĕ хăйĕн талантлă ывăлĕпе савăннă пекех савăнаççĕ унпа. Çавăнпа та фабрикăсемпе заводсенче, колхозсенче, учрежденисемпе аслă шкулсенче пулса иртекен пухусенче Чкалова ССР Союзĕн Аслă Совечĕн Националнăçсен Советне депутата суйлама пĕр сасăпах кандидатата тăратаççĕ. Орджоникидзе йачĕпе тăракан заводра рабочисен пухувĕнче, рабочи-орденоносец Воинов йулташ çапла каларĕ:

— Пирĕн çĕршывра чаплă çынсем ӳсрĕç. Çавăн пек çынсен пĕр представителĕ—епĕр пурте паллакан пирĕн земђак, сталинла сокол, Совет Союзĕн Геройĕ—Валерий Павлович Чкалов пулать. Унăн кандидатури—пирĕн заводран тăратмали тивĕçлĕ кандидатурă.

Валерий Павлович пĕтĕм çĕршывран вуншар çыру, телеграммă, постановленисемпе резођуцисем илнĕ. Унран Националнăçсен Советне суйламали Горькири суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтаççĕ.

Чкалов йулташ килĕшӳ пачĕ. Округри суйлав комиççийĕ унăн кандидатурине регистрацилерĕ. Горьки облаçĕнчи тата Чăваш республикинчи суйлавçăсен мĕлйунла массисавăнсах сталинла соколшăн, социалисăмла çĕршывăн аслă органĕн депутачĕ пулма тивĕçлĕ кандидатшăн хăйсен бӳллетенĕсене парĕç.

Л. Кудреватых.

Учителсем суйлав кампанине активлăн хутшăнаççĕ

Халăх учителĕн политикăла-обшчествăла активлăхĕ нихçанхи пек мар пысăк хастарлăхпа ӳссе пырать.

Шăмăршă районĕнчи учителсем ĕççыннисене çĕнĕ Конституципе „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ ăнлантарса пама хăйсен хушшинчен 94 пропагандист уйăрнă. Вĕсем пĕтĕм районĕпе 83 кружок организациленĕ.

Йелчĕк районĕнчи Тăрмăш шкулĕнче вĕрентекен учителсем агитаци ĕçне уйрăмах çамрăксем хушшинче лайăх йĕркеленĕ. М. Ласточкина учителница (Тăрмăш) кашни каç политзанђатисем иртерет. Политзанђатисем хыççăн хĕрупраçсем çĕнĕ йурăсем вĕренеççĕ.

Тутаркас районĕнчи учителсем çĕнĕ суйлав саккунне вĕренме хăйсем тĕллĕн 17 кружок организациленĕ. Вăл кружоксенче пĕтĕмпе 235 учител тăрать. Суйлавçăсем хушшинче ĕçлеме учителсен Союзĕ 109 пропагандис уйăрнă. Пропагандис-учителсем йалсенчи кружоксене йертсе пыраççĕ. Çак кружоксене пĕтĕмпе 3115 çын йавăçтарнă. Чумак-касси йалсоветĕнчи учителсем 6 кружокра ĕçлеççĕ. Вăл кружоксенче пурĕ 162 çын вĕренет. Учителсен союзĕн Мăн Сĕнтĕрти селькомĕ Мăн Сĕнтĕр йалсоветĕнче ĕçлеме 8 пропагандис, кӳршĕ йалсене вађђи 7 пропагандис уйăрнă. Пĕтĕмпе вĕсем 14 кружока йертсе пыраççĕ, вăл кружоксенче 395 çын вĕренет.

Шӳпуç шкулĕнчи учителница Йашмолкина йулташ йаланхи пекех суйлав кампанинче те пысăк активлăхпа хутшăнса ĕçлет. Вăл „Аслă Совета суйламали Положенине“ вĕрентнĕ çĕрте ĕççыннисене суйлав саккунне тĕплĕн ăнлантарса пама тăрăшать. Çĕнĕ Конституципе суйлав Положенин статйисене пурнăçран илнĕ вырăнти материалсемпе çыхăнтарать.

Çавăн пекех ытти чылай районсенчи учителсем те суйлав Положенине вĕрентес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. Елĕк районĕнчи учителсем агитаципе пропагандă ĕçне 267 çын, Йетĕрнесем—41 çын, Куславккасем—51 çын уйăрса çирĕплетнĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи Йантуш шкулĕнче вĕрентекен учителсем, суйлав Положенине тĕплĕн пропагандăланисĕр пуçне, суйлав кампани йачĕпе, колхоз клубĕнче комсомолецсемпе пĕрле хаваслă вечăрсем туса иртереççĕ. Хор, драмă, физкуђтурă кружокĕсем çĕнĕрен çĕнĕ йура-вăйăсем вĕренеççĕ. Клуб заведуйушчийĕ комсомолец Варламов çĕршыври, колхозри çитĕнӳсем çинчен калакан диаграммăсем туса, вĕсене клуб стенисем çине çапса тухнă.

Учителсен, çавăн пекех шкул ачисен активлăхĕ пысăк, анчах çак активлăха организацилес тĕлĕшпе Çутĕç халăх комиссариачĕпе учителсен Союзĕн Облăçри комитечĕ питех те начар ĕçлеççĕ. Вĕсем, свидетелсем пек, айакран кăна пăхса тăраççĕ, ытахађтен сводкăсем пухаççĕ.

— Лайăх пропагандис-учителĕн йатне калама хăратăп, тем пулас килес?!—тет Союз Обкомĕн председателĕ Владимиров йулташ.

Учителсен тĕп масси суйлав кампанинче лайăх ĕçлет. Çав вăхăтрах ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Хăшпĕр вырăнти учителсем суйлав Положенине хăйсем тĕллĕн вĕреннипех çырлахма пăхаççĕ, вĕсем халăх хушшинче сахалтарах пулаççĕ. Тепĕр çĕрте тата ирсĕр ĕç тăвакансем те тĕлпулкалаççĕ. Ишлей районĕнчи Тивĕш ĕççыннисем Филиппов учителе шанса, ăна участкăри суйлав комиççине суйланă. Анчах Филиппов суйлав участкинче тимлĕн ĕçлес вырăнне, йалта ĕçсе ӳсĕрĕлсе, ирсĕр, хулиганла ĕçсем туса çӳрет.

Суйлав кампанин çĕнĕ тапхăрĕ пуçланчĕ—пирĕн хамăр тăратнă кандидатурăсемшĕн агитацилемеле. Мĕн пур суйлавçăсене пулас депутатсен пурнăçĕпе тата ĕçĕпе тĕплĕн паллаштармала. Суйлав участки—массăлă политикăла ĕçĕн центрĕ. Учителсем, шкулта вĕренекен ачасем суйлав участкин ĕçне тата активлăнрах хутшăнмала. Вĕсем доверенăйсене ĕçлеме пулăшмала, йалта чăн-чăн боđшевикла агитатăрсем пулса ĕçлемеле.

А. Александров.

Аслӑ Совета суйлас умӗнхи колхозлӑ йал

Камшӑн сасӑлама кирли ҫинчен епӗр пӗлетпӗр

Пирӗн Совет ҫӗршывӗнче тӗлӗнмеле улшӑнусем пулса иртрӗҫ. Епӗр халӗ, колхозниксем, пуйан та кулътурлӑ, тулли пурнӑҫпа пурӑнатпӑр. Ҫӗнӗ, Сталинла Конституци, тӗнчере чи демократлӑ Конституци тӑрӑх Совет Сойузӗн Аслӑ Советне суйлас вӑхӑта ҫитсе тӑтӑмӑр. Паллах, ҫакӑн пек ӳсӗме епӗр хамӑр большевиксен партийӗ йертсе пынипе кӗрешсе илтӗмӗр. Калас пулат, ҫӗнӗ пурнӑҫшӑн пынӑ кӗрешӳ ҫӑмӑл пулман, тата ҫав кӗрешӳ халӗ те пӗтмен-ха, мӗншӗн тесен халӑх тӑшманӗсем пире, хресченсене, помещиксемпе кулаксен пусмӑрӗ айӗнче пурӑнмала тӑвас шухӑш халӗ те пӑрахман.

Ҫуклӑх пирки ӗлӗк, революциччен, епӗ айакра заводсенче ӗҫлесе пурӑннӑ. Капиталиссем рабочисене йепле експлоатацилени епӗ хам ӗнсе ҫинче те тӳссе курнӑ. Епӗ заводра ӗҫлесе инвалида тухнӑшӑн никам та мар,—капиталиссем ҫеҫ айаплӑ. Ман пӳрнесене хуҫа вылийӗнче тӑракан заводри машинӑсем татса илчӗҫ.

Ҫавӑнпа та, Аслӑ Октабӗрти революци рабочисемпе хресченсене влаҫа алла илнӗ хыҫҫӑн епӗ пит савӑнтӑм. Малтанхи ҫулсенче епӗ хам та вулӑҫра ответлӑ работник пулса ӗҫленӗ. Кайрантарах йалта общественлӑ организацисенче ӗҫлерӗм. Колхоз организацийӗнче чылай те организаторсенчен пӗри пулмала пулчӗ. Кулаксемпе вӗсен йыттисемпе пит хытӑ кӗрешсе пымала пулчӗ. Ҫавӑншӑн вӗсем мана инкек-синкек те кӑлартрӗҫ, 1930 ҫулта кӗмӑкпа кӗл ҫине ларса йулмала пулчӗ. Анчах, кулаксемпе вӗсемпе пӗр шухӑшлисем ун чухне урса кайнӑ пекех хӑтланчӗҫ пулин те, вӗсен ӗҫ тухмарӗ. Колхоз йухӑмӗ ҫӗнтерчӗ ҫӗнтерчех. Пуйан та кулътурлӑ, тулли пурнӑҫ ҫитрӗ ҫитрех. Чухӑнсен ӗмӗчӗ пурнӑҫа кӗчӗ кӗчех.

Пирӗн „Колос" колхозра халӗ тырӑ ҫитмен колхозник ҫук. Паллах, ӗҫлемен пулсан вӑл нумайах илеймест. Тӑрӑшса ӗҫлекенсем пӗччен 150-шер пӑт, ҫемйипе 400-шер пӑт ытла илекенсем сахал мар пирӗн колхозра. Епӗ кунта чылай колхозниксем ҫӗнӗрен кил-ҫурт ҫавӑрни ҫинчен, ӗлӗк чухӑн хресчен пулнисем халӗ кил карти тулли выльӑх-чӗрлӗх усракан пулни ҫинче чарӑнса тӑрасшӑн мар. Ман ҫынсем улшӑнни ҫинчен калас килет.

Нумайӗшӗ ват ҫын ӗлӗк йепле пулнӑ вӑл, халӗ те ҫавах йулат, тесе шутлассӗ. Ку вӑл пӗртте тӗрӗс мар. Ват ҫынсем те колхозра нумай улшӑнчӗҫ. Ҫамрӑккисемпе хӗрарӑмсем ҫинчен епӗ каламастӑп та. Акӑ, Йемелйан Тихонович 77 ҫула ҫитнӗ пулин те пӗртте ӗҫсӗр ларасшӑн мар. Час-часах колхоз правленине пыра-пыра кайат. Йаков Андрейевич, 70 ҫултан иртнӗскер, викӑ ҫулнӑ чух мана намӑслантарса та илчӗ, ӗҫре манран та иртсе кайасшӑн. Орешникова 60 ҫула ҫитет. Кӑҫал вӑл хӑй пӗччен 138 ӗҫкунӗ тунӑ.

Колхоз ваттисем хӑйсем ӗҫленӗ чух ҫамрӑксене вӗрентме, ӗҫе тирпейлӗ тума тӑрӑшни ҫинчен те каламала. Ӗҫе тирпейлӗ туман пулсан, вӑл ӗҫ Орешникова карчӑк куҫ тӗлне пулсан,—таҫта айакка тар вара унтан—пӗтерет вӑл сана намӑслантарса.

Ҫапла ӗнтӗ, пурнӑҫ та, ҫынсем те улшӑнчӗҫ. Пӗтӗм йал ҫӗнелчӗ. Савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ пуҫланчӗ. Ҫавах та ҫитменлӗхсем те пур пирӗн. Йала тӗлӗшпе епӗр халӗ йулса пырапӑр-ха, кулътура тӗлӗшпе те хӑвӑрт малалла кайма пур майсемпе те усӑ курма пӗлместпӗр.

Етӗр халӗ час-часах пухӑнса Совет Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали депутатсем ҫинчен сӳтсе-йавӑтпӑр. Ҫавӑн чухне епӗр пире ҫак пурнӑҫа кам пани ҫинчен те манмастпӑр. Аслӑ Совета Ленин—Сталин партине чӗререн парӑннӑ, халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ хӑйне шеллемесӗр кӗрешсе пыракан ҫынсене суйламала.

„Колос" к-з членӗ—
Ф. Горланов.

Колхозра епӗ ҫын пултӑм

Епӗ чухӑн ҫын ывӑлӗ. Ӗлӗк, революциччен, пирӗн сакӑр ҫын пӳҫне мӗн пурӗ те пӗр йат ҫеҫ ҫӗр пулнӑ. Тырпул нихӑҫан та ҫитмен. Ҫавӑнпа та атте хамӑр йалти кулак Роман Петрович патӗнче тарҫӑра пурӑннӑ. Аслӑ пичче пӗчӗкренех земски начаљник патӗнче ӗҫлесе пурӑннӑ. Тепӗр пичче те—Михаил пӗчӗкренех Чулхулара хӑма ҫуракан заводра ӗҫленӗ. Епӗ хам 17 ҫула ҫитиччченех кӗтӳҫре ҫӳренӗ. 1919 ҫулта вара Атӑл ҫинче бакӑншчике ӗҫлеме кӗнӗ. Унта вара 1923 ҫулччченех ӗҫленӗ. Шыв ҫинче ӗҫлеме, паллах, ҫӑмӑл пулман, темиҫе хут та шыва кайма тӑнӑ. Йурат хамӑн йулташсем турта-турта кӑларнӑ.

1923 ҫулта Хӗрлӗ ҫара кайрӑм. Унта икӗ ҫул хушши пурӑнтӑм. Командирсем хушнине пурне те лайӑх туса пынӑ. 1925 ҫулта Хӗрлӗ ҫартан таврӑнсан, пӑхатӑп—хуҫалӑх йапӑх. Каллех Атӑл ҫине ӗҫлеме каймала пулчӗ. Вара 5—6 ҫул хушши ҫав вырӑнтах ӗҫлерӗм.

Ҫавах та, темле ӗҫлесен те, пӗччен хуҫалӑхпа пурӑнма йаваррине лайӑх ӑнланса илтӗм. Вара 1931 ҫулта колхоза илме ыйтрӑм. Пӑхатӑп—лайӑх ӗҫлесен колхозра пурнӑҫа йусама май пур. 1932 ҫулта мана колхозниксен пухувӗнче аслӑ коньуха илчӗҫ. Ҫав ӗҫре епӗ пит тӳрӗ ӗҫлесе пытӑм. Ҫуллен мана укҫан та, кирлӗ хатӗрсемпе те премии парса тӑчӗҫ. Коньухра кӑҫалччен ӗҫлесе пурӗ 24 тыха ҫамрӑкран ӳстертӗм. Вӑл шутран тӑватташне йатарласах Хӗрлӗ ҫар фончӗ валљи ӳстернӗ. Вӗсем халь те пит лайӑх лашасем.

Колхозра тӳрӗ тата тӑрӑшса ӗҫлени мана мӗн пачӗ-ха? Колхоз организациленме пуҫлавни 10 ҫул тултарнӑ тӗле манӑн ҫакна калас килет. Ҫурт-тавраш манӑн пӗтӗмпех кивелсе кайнӑскер пулнӑ. Пӳрт вара пайан-ыран ишӗлсе анас пек ларнӑ. Халь ӗнтӗ ҫак йенчен ман нимӗнле хуйхӑ та ҫук. Пӳрт ҫӗнӗ лартрӑм, ӑшне сӑрлаттартӑм. Пӳрт ӑшчиккинче пӗтӗмпех урахла: стена ҫинче сехет ҫакӑнса тӑрат, кашнинех уйрӑм алшӑли, пӗр сӗтел ҫинче хаҫатсем тата патефон, тепӗр сӗтелӗ ҫинче—ҫӗвӗ ҫӗлемели машинӑ.

Ҫак ҫулсенчех ӗнесем валљи ҫӗнӗ сарай лартрӑм. Кил карти тулли выљӑх. Пылхурчӗ те усрама тытӑнтӑм.

Тӑхӑнма та тумтир ҫителӗклӗ. Кашнин тӑлӑп, виҫшер мӑшӑр кӑҫатӑ, сӑран атӑ, ботинкӑсем, калушсем. Кашниннех ҫӗнӗ пальто, пиншаксем, кӗрӗксем.

Епӗ кун пек пурнӑҫа тӗлӗкре те курман вӗт. Ӗлӗк велоҫипедпа земски начаљник ывӑлӗсем ҫӳренине ҫеҫ курнӑ. Халь манӑн хамӑнах велосипед пур. Манӑн татах нумайрах ӗҫлес килет, халь тата мотоциклет илес шухӑш пур.

Кӑҫал епӗ арӑмпа пӗрле пурӗ 450 ӗҫкунӗ тунӑ. Ҫав май 225 пӑт таран тырӑ илетпӗр. Ун чухлӗ тырӑ пирӗн киле нихӑҫан та кӗрсе курман. Мӗншӗн савӑнас мар-ха.

Ҫакӑн пек пурнӑҫа пире кам туса панине епӗ лайӑх пӗлсе тӑратӑп. Вӗсем ман ӑшӑмран каймассӗ. Ҫавӑнпа вӗсен портречӗсем—Ленинпа Сталин сӑнӗсем ман пӳртре чи хисеплӗ вырӑнта.

„Колос" колхоз членӗ—
Захар Сундырев.

Хамӑр ҫӗнтерӗве никама та парас ҫук

Колхоз пирӗн нумай ҫитӗнӳсем турӗ. Анчах пире ҫав ҫитӗнӳсем лӑплантарма пултараймассӗ. Пирӗн ӗҫ те нумай ҫӑмӑлланчӗ, машинӑсемпе ӗҫлетпӗр. Ҫавӑнпа епӗр, колхозниксем, колхозри ӗҫре ҫеҫ мар, хамӑр социалисӑмлӑ промышленнӑҫпа транспорта вӑйлатас тӗлӗшпе те ӗҫлеме пултаратпӑр. Кӑҫал акӑ Шупашкарпа Канаш хушшинче чукунҫул тунӑ ҫӗрте тӑрӑшсах ӗҫлерӗмӗр. План тӑрӑх пирӗн „Колос" колхозӑн 750 кубла метр тӑпра купаламала пулнӑ. Епӗр вӑл плана ытлашшипех тултартӑмӑр, пурӗ 1277 кубла метр кӑларнӑ.

Халь нойабӗр уйахӗнчи стахановла вунӑкунлӑха хутшӑнса тӑрӑшсах ӗҫлерӗмӗр. Уйрӑмӑнах Петров Емелйан ҫинчен калас килет. Вӑл 54 ҫултан иртнӗ пулсан та чӑн-чӑнах стахановла ӗҫлерӗ: „Епӗр,—тет вӑл,—ҫак ӗҫе хамӑршӑн тӑватпӑр. Есӗр пӗлетӗри, Германипе Йапони фашисӑмӗ пирӗн ҫине тапӑнасшӑн. Епӗр, колхозниксем, вӗсене хирӗҫ мӗнпе ответлеме пултаратпӑр? Стахановла ӗҫленипе ҫеҫ. Транспорт ӗҫне вӑйлатни пире тӑшман тапӑнасран сыхлама нумай пулӑшат."

Ҫапла вара, пирӗн колхозра пурте, ваттисем те хамӑрӑн ҫӗршыва сыхлас ӗҫе активлӑн хутшӑнса ӗҫлессӗ, мӗншӗн тесен пирӗн ҫирӗп сыхламалисем сахал мар, епӗр пире ҫын пулма, пуйан та кулътурлӑ пурӑнма май панӑ колхозла стройа никама та аркатма парас ҫук.

Колхозник Вас. Йефремов.

Сӗрпӳри гидростанци строителствинчи платник-ударник Федотов Никонор. Вӑл 55 ҫулта. Петров фото-ӳкерчӗкӗ.

Пирӗн ӳсӗм кашнин куҫ умӗнче

—Колхозла пурнӑҫ—тӗлӗнмеле пурнӑҫ: кам мӗнле ӗҫе йуратат, вӑл ҫав ӗҫрех ӗҫлесе тӑрса йулашкинчен вара ӑстана тухса кайат. Епӗ хамах илетӗп,—тет колхозник Михаил Краснов.—Алла пуртӑ тытмала пулса ҫитсенех епӗ йӑвӑҫ каскалама йуратнӑ. Йулашкинчен вара, колхозра витесем тата ытти строителствӑ ӗҫӗнче ӗҫлекелесех платнике тухса кайрӑм.

Анчах ман специаљнӑҫ халь урӑх. Хамран хам тӗлӗнетӗп. Колхоз тимӗрҫи пулса кайрӑм вӗт. Тимӗрҫӗ пуласси ҫинчен епӗ ӗмӗрте те шухӑшласа пӑхман. Колхоз вот манран тимӗрҫӗ турӗ. Халь пуртӑсемех шӑратса пӑхман, ҫавах та колхоз хуҫалӑхӗнче мӗн кирлине пурне те тума пултаратӑп.

Кун пек тӗлӗнмеле ӗҫ манпа ҫеҫ пулман. Акӑ, Мочалов Харитон Лукича илер. Вӑл ӗлӗк те платникре ӗҫленӗ. Йалсем тӑрӑх ҫӳресе хӑйӗн пурнӑҫӗнче мӗн чухлӗ пӳрт тунӑ пуль вӑл. Колхозра вӑл айакка ҫӳремесӗрех хӑйне валљи ӗҫ тупрӗ. Строителствӑ ӗҫе колхозра нихӑҫан та пӗтмест. Малтан лаша вити тунӑ. Кайарахран ӗне ферми валљи вите, тепӗр ҫулне лашасем валљи тепӗр вите. Иртнӗ ҫул вот клуб тумала пулчӗ. Витнӗ итемсем тата ытти тӗрлӗ ҫуртсем, кӗскен каласан строителствӑ тӗлӗшпе уйрӑм пӗр бригадӑ валљи йалан ӗҫ ҫитет. Колхозла пурнӑҫ вӗт шалтан ҫеҫ мар, тултан та лайӑхланса улшӑнса пырат. Ӑна кашнийех курат, ҫавӑнпа кашни колхозник саванса ӗҫлет.

"Колос" колхоз членӗ
Краснов калаҫнинчен.

Ҫамрӑк красноармейец ҫырӑвӗ

Ӗлӗк ҫара кайакан ҫын хӑйне телейсӗр ҫын вырӑнне шутланӑ. Халӗ совет ҫамрӑкӗсем Хӗрлӗ ҫар ретне саванса кайассӗ. Епӗ те хамӑран йуратнӑ тӑван ҫӗршыва сыхлама тивӗҫлӗ пулнӑшӑн савӑнатӑп.

Епӗр кунта Совет Сойузӗнчи нацисен ывӑлӗсем пурте пӗр ҫемйе пулса пурӑнатпӑр. Пирӗн пуҫра пӗр шухӑш: ҫар техникине лайӑх вӗренсе, ҫӗршыва тӑшмансенчен тимлӗн сыхласси.

Пире кунта, амӑшӗ хӑйӗн йуратнӑ ачисене кӗтсе илнӗ пек, ҫав тери кӑмӑллӑн кӗтсе илчӗҫ. Ҫарта чылай вӑхӑт пурӑннӑ, ҫар йӗркине лайӑх хӑнӑхса ҫитнӗ красноармейецсем стройпа илемлӗн, пӗр тикӗссӗн утнине курсан, хамӑртан хамӑр вӑтантӑмӑр: епӗр стройпа йӗркелӗ утма пултараймастпӑр.

— Малтан вӗсем те сирӗн пекех пулнӑ,—терӗ те командир, пирӗн ӑш лӑпланчӗ. Ҫар ӗҫне часрах вӗренес кӑмӑл ҫӗкленчӗ.

Халӗ ӗнте епӗр стройпа утма лайӑх вӗренсе ҫитрӗмӗр. Ҫар техникине тата политикӑна та тӑрӑшса вӗренетпӗр. Кану вӑхӑтне савӑнӑҫлӑн иртеретпӗр. Епӗр, чӑваш ачисем, хор кружокӗ организацилерӗмӗр. Кружока красноармейец П. Йермаков йулташ йертсе пырат. Вӑл йертсе пынипе час-часах пултарулӑх вечӗрӗсенче чӑваш йуррисене йурлатпӑр, чӑваш ташшисене ташласа кӑтартатпӑр.

Октабӗр революцийӗ 20 ҫул тултарнӑ йатпа гарнизон клубӗнче пулнӑ пысӑк вечӑрта „Малала утар" „Вӑрман витӗр тухрӑмӑр", „Кай, кай Ивана" йурӑсене лайӑх йурласа панӑшӑн командовани пире пурне те благодарнӑҫ пачӗ.

Ҫапла, орденлӗ Чӑваш республикӗнчен килнӗ ҫамрӑксем ҫар ретӗнче пысӑк авторитетпа усӑ курассӗ. Пирӗнтен пӗри—В. Прокопйев йулташ участкӑри суйлав комиҫҫин членӗ пулма та тивӗҫлӗ пулчӗ.

С. Шибарцов.

Агитаторсем ӗҫре

ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйлама хатӗрленнӗ май, Шаккӑл йалсоветӗнче, суйлавҫӑсем хушшинче массӑлӑ-ӑнлантарулӑ ӗҫе туса пыма кашни 12—15 хуҫалӑх ҫумнех пӗр агитатор ҫирӗплетнӗ. Кунта агитаторсем ҫителӗклӗ: пӗр Шаккӑл йалӗнчех агитаторсен йышӗ 20 ҫынна йахӑн. Ҫав агитаторсен йышӗнчен Мерескин А., Захаров Д., Семенов А., Иванов П. йулташсем суйлавҫӑсене пӗр ҫӗре пухса кӑна мар, килрен киле ҫӳресе те суйлав саккунне вӗрентессӗ.

Шаккӑл йалсоветне кӗрекен Кивахпӳрт йалӗнче суйлав саккунне вӗренмели кружокран 40 ҫын вӗренсе тухнӑ. Курсран вӗренсе тухнӑ 17 ҫынран 10 ҫын колхозниксемпе йединоличниксене суйлав саккунне вӗрентес тӗлӗшпе агитатор пулса ӗҫлессӗ. Кошкин Константин пухусенче, вечӑрсенче тата вуламали ҫуртра суйлав саккунӗ ҫинчен каласусем иртернисӗр пуҫне, хӑй ҫумне ҫирӗплетнӗ 18 хуҫалӑхри суйлавҫӑсене килрен киле ҫӳресе те, вӗсене пӗр ҫӗре пухса та суйлав саккунне вӗрентет.

Пӗтӗмӗшпе илсен, Шаккӑл йалсовечӗ, икӗ йалӗнче те, массӑла-агитацилӗ ӗҫ начар пырат-ха. Икӗ йалӗнче те суйлавҫӑсенчен чылайӗшӗ суйлав хӑҫан тата ӑҫта пулса иртессине пӗлмессӗ.

„Суйлав кунӗ чи ответлӑ кун. Вӑл епӗр суйлава хатӗрленсе агитацилӗ тата организацилӗ ӗҫсем туса пынин итогне тӑват" (Калинин). Ӗҫри ответлӑх, уйрӑмӑнах, участкӑсенчи суйлав комиҫҫисен тата вӗсен членӗсем ҫине тивет. Ҫавӑн пекех участкӑсенчи агитаторсен те пикенсех ӗҫлемеле.

А. Соловйов.

ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйлама хатӗрленес кампани пӗтӗм ҫӗршыв тӑрӑх анлӑн сарӑлса пырат.

Ӳкерчӗк ҫинче: Н-ски чаҫри партбӳро секретарӗ Шамрайенко йулташ (сылтӑмра) Сушкин лейтенанта инструкци парат. Сушкин лейтенант Куйбышев хулинчи граждӑнсен ҫӗнӗ суйлав саккунне вӗренмели пӗр кружокра занятисем иртерет.

Н. Фиников фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

Каткасси вунӑ ҫул хушшинче

Ку лап вунӑ ҫул кайарах пулнӑ. Халӑх тӗлӗнмеле, халиччен курман кӗпер тӑват. Йӑваҫран мар, чулран. Миҫе ҫунарапа ватнӑ пуль, миҫе лаша амантнӑ пуль ҫав тарӑн ҫырмара каткассем. Ҫав тери тарӑхса ҫитнӗ вӗсем Лешекки ҫырми ҫине.

Анчах, чӑннипе илсен, йалӗпе пӗрлешсе чул кӗпер тума тытӑнни ҫырма ҫине тарӑхнӑшӑн та мар. Ӗҫ урӑхран пуҫланса кайнӑ. Йал тӑватӑ пайа пайланса тӑнӑ: Лешекки, Тукас, Вӑтакарташ, Ҫӗнйал. Вӗсенчен виҫҫӗшӗ тарӑн ҫырмаран пӗр йенче, Лешекки—тепӗр йенче. Ҫав ҫырма ҫине пуринчен ытларах Лешеккисен тарӑхса пурӑнмала пулнӑ. Ҫавӑнпа та вӗсем, текех ҫырма урлӑ каҫса ҫӳреме ан пултӑр тесе, йулташлӑх организацилесе Каткас ҫӗр обшествинчен уйӑрӑлма, хӑйсен йенче выртакан ҫӗре каҫса илме шут тытнӑ.

Ҫакӑн ҫинчен йал тӑрӑх сас-чӗв тухса кайат. Йулашкинчен халӑх пухувӗнче ыйту тухса тӑрат.

— Ун пек тума памастпӑр, ан та хӑтланӑр,—теҫҫӗ лешеккисене.

— Чарма пултараймастӑр, епӗр йулташлӑх тӑватпӑр,—теҫҫӗ лешисем.—Ҫитменнине ҫырма пирки те епӗр нумай асап куратпӑр, пирӗн уйӑрӑлмалах.

—Апла епӗр йалӗпе пӗрле кӗпер туса парӑпӑр, йулташлӑх тавраш ҫинчен шутлама пӑрахатӑр пулсан,—тесе ыйтаҫҫӗ кусенчен.

Ҫапла пуҫланса кайнӑ чул кӗпер тӑвас ӗҫ. Кӗперне тунӑ, анчах йалта пӗрле ӗҫлесе пурӑнмали йулташлӑх тӑвас шухӑш пӗтсе ларман. Кун ҫинчен чухӑнсемпе йалти активиссем чылай шухӑшласа пӑхнӑ, анчах мӗнле йулташлӑх тумалине, мӗнле формӑпа пӗрлешмелине малтанах тупайман. Йулашкинчен тупнӑ тупнах. Анчах, халь ӗнтӗ, тарӑн ҫырма пирки мар, ӗҫ паларах ҫайат—пӗтӗм пурнӑҫа лайӑхлатасси ҫинчен сӑмах пырат.

Кӗперне ҫулла тунӑ, анчах кӗркунне ҫитсен йулташлӑх ҫинчен ҫеҫ мар, чылайӗшӗ коллективлӑ хуҫалӑх ҫинчен каласма пуҫлассӗ. Кун ҫинчен ахаль каласнӑ ҫеҫ мар, пухусенче те сӑмахсем илтӗнме пуҫланӑ. Пухусенчех харкашусем те пулса иртнӗ.

Малтанах ҫӗре пӗрле ӗҫлемели йулташлӑх организациленӗ, анчах йулташлӑха 120 хуҫалӑхран та 6 хуҫалӑх ҫеҫ ҫыраннӑ. Ҫав хӗлрен тапратса вара йал тӑватӑ пайа мар, икӗ тӗп пайа пайланат: ҫӗре пӗрле ӗҫлемели йулташлӑх членӗсем тата ӑна хирӗҫлисем. Иккӗшӗн хушшинче пит вӑйлӑ кӗрешӳ пуҫланат, клас кӗрешӗвӗ хайаррӑн пырат. Паллах, ҫак иккӗшӗн хушшинче икӗ майлӑ турткаланса тӑракансем те пулнӑ; вӗсем нумайрах та пулнӑ пуль, вӗсем хӑш йенӗ ҫӗнтерессине пӑхса тӑнӑ.

— Пулнӑ вӑхӑт, халӑх пухувӗнчен тухсан колхоз тӑшманӗсем хирӗҫ пулса кирек мӗн тума ан пултарччӗр тесе килле те вӑрттӑн ҫырса кӗреттӗмччӗ,—тет колхоз организаторӗсенчен пӗрри Горланов йулташ.

Анчах ун пек вӑрттӑн ҫӳрени те пулӑшмаст ӑна. Кӑш пурӑнарахпа унӑн кил-ҫуртӗнчен кӗлпе кӑмрӑк ҫеҫ тӑрса йулат. Кулаксен алли кунпа та чарӑнмаст. Колхоз кунтан куна ҫирӗпленсе пыни вӗсене татах та хайарлатат. 1932 ҫулта вӗсем тепӗр активлӑ колхозникӗн М. Бочков йулташӑн кил-ҫуртне ҫунтарса йараҫҫӗ. Ҫавах та колхоз йышӗ ӳснӗ ҫемӗн ӳсех пырат, колхоз, 1930 ҫултан пуҫласа йалхуҫалӑх артелӗ, кунран куна ҫирӗпленет. Колхоз йухӑмӗ ҫӗнтерик йалта кулаксен класне нӗтерет, колхоз ҫирӗпленни Горлановпа Бочкова ӗлӗкхинчен те аванрах кил-ҫурт ҫавӑрма май парат. Ҫав ӗҫсем хыҫҫӑн колхозниксем кулаксемпа татах вирлӗнрех кӗрешме тытӑнаҫҫӗ, вӗсем йалти комуниссем таврара ҫирӗппӗн пӗрлешсе кулак йулашкийӗсене пуҫ ҫӗклеме памаҫҫӗ, тӑшманла шухӑшсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пыраҫҫӗ. Колхоз ҫирӗпленесси, колхозниксен пурнӑҫӗ лайӑхланасси тӑшмансене вӑхӑтра палӑртса ҫапса хуҫнинчен килнине вӗсем лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ.

***

Вунӑ ҫул. Вунӑ ҫул вӑл етемлӗх историйӗнче пӗртте пысӑк тапхӑр мар. Ҫав вӑхӑт хушшинче колхозла йал шалтан та, тултан та урӑхланчӗ. Пурнӑҫ ҫеҫ те мар, ҫынсем те улшӑнчӗҫ. Бригадир, машинис, коньух, шофер, стахановец, ударник, завхоз, тимӗрҫӗ—хальхи йалта хисеплӗ ҫынсем.

— Пирӗн халь гектартан ҫӗр пӑт йе ытларах тырпул туса илеҫҫӗ те, мухтанма шутлаҫҫӗ. Пӗр-ик ҫултан курӑр акӑ—капла ҫеҫ пулмаст. Нумай-и вӑл 120 пӑт? Епӗр акӑ 300—400 пӑт илесшӗн. Ҫавӑн чухлӗ илекен пулатпӑрах вӗт, анчах кӑшт вӗренме кирлӗ тата мухтанма йурамаст,—тет пӗр бригадир.

— Ҫӗр вӑл кӑмакари кукӑль пек: час кӑларатӑн—пиҫсе ҫитмен, кайа йулатӑн—ҫунса кайнӑ. Чӑнахах ҫӗрӗн майне пӗлсе ҫитме кирлӗ,—тет тепӗр бригадир.

Акуча ҫӗрӗ тенӗ вырӑнта ӗлӗк нихҫан та 30—40 пӑтран ытла тырӑ илеймен пулсан, колхоз халь 100 пӑт илет. „Киремет уйӗ" те „четвертое поле" йат илнӗренпе йусаннӑ—тулӑ аксан та пулат. Хӗрлӗ тӑмлӑ „Кутӑлӑха" та колхозниксем парӑнтарнӑ. Ахальрен мар кӑҫал вӗсем ӗҫкунӗ пуҫне ҫуршер пӑт таса тӗштырӑ илеҫҫӗ. Ахальрен мар колхозниксем ҫулта ҫула пуйантарах пурӑнакан пулса пыраҫҫӗ.

Сундырев Захарӑн ӗлӗк ашшӗ те, пиччӗшӗсем те вӑл хӑй те тарҫӑра йе айакра ӗҫлесе пурӑннӑ. Пӗр йат ҫӗрпе саккӑррӑн пурӑнса нихӑҫан та ҫиме ҫитмелӗх тырӑ тума пултарайман. Халь унӑн мӗн пур? Колхозра ӗҫленипех ҫӗнӗ пӳрт лартнӑ, патефон тата велосипед туйаннӑ. Кил карти тулли выльӑх-чӗрлӗх. Иккӗн ӗҫлесех 220 пӑт таран тырӑ илет кӑҫал.

— Мӗн кирлӗ пурте пур, анчах пӗр йапала ҫитмест—мотоциклет илес килет,—тет вӑл.

Слепнев Виктор ӗлӗк кивӗ, ҫӑмӑр йаракан ҫивиттилӗ тӑвӑр пӳртре пурӑннӑскер, кӑҫал ҫӗнӗ пӳрт лартнӑ. Ӗлӗк малтан чӗрӗк, кайарахран ҫур йат ҫӗрпе пурӑнса, ҫӗвӗҫ ҫӗлесе те пулин ҫынсем пек пурӑнма тӑрӑшса пурӑннӑскер, кӑҫал ҫемйипе 400 пӑт ытла тырӑ илет.

Чухӑнсенчен ҫӗнӗ пӳрт лартнисем йӗркипех: Орешниковсем, Петров Йемелйан, Серов Йемелйан, Арешменев Федор тата ытти те. Ҫавӑн пекех, халиччен илсе курман тырпул илекенсем те йӗркипех тупӑнаҫҫӗ. Хывма вырӑн ҫитмен пирки ҫӗнӗ амбар лартас ыйту умӗнче тӑраканнисем те пур.

Выльӑх-чӗрлӗхсӗр колхозник ҫук ӗнтӗ. Ӗнесӗр хуҫалӑхсем ӗлӗк 25—30 процент хушшинче тӑнӑ пулсан, халь вӗсем „Колос" колхозра пӗртте ҫук.

Пуйан та кулътурлӑ пурнӑҫ савӑнтарат колхозниксене. Пыр та кур халь колхоз ҫамрӑкӗсене. Вӗсемшӗн халь колхоз клубӗ йаланах уҫӑ. Унта тӗрлӗрен кружоксем, вӗсене валљи хаҫатсем, шашкӑпа шахмӑт, домино, биллиард. Ҫулла пулсан валейбол, футбол. Ӗлӗк йелӗпе пӗр „тальйанкӑ" пулнӑ пулсан, халь 6 „двухрядкӑ", 4 патефон, балалайкӑсене шутласа кӑларма та ҫук.

Пыр та кур халихи хӗрарӑмсене. Ӗлӗк вӗсем пухува тухса арҫынсем хушшинче сӑмах калама мар, ҫӑвар уҫма та вӑтаннӑ. Пысӑк уйрӑмлӑх ӗлӗкхи хӗрарӑмпа колхозницӑсем хушшинче!

Пыр та кур ваттисене. Ҫамрӑкланса кайнӑ вӗсем. 70 ҫултан иртнӗ колхозник Йаков Андрейевич ҫинчен Горланов колхозник ҫапла каласа парат:

— Пӗре епӗр викӑ ҫулатпӑр. Викӑ тӳшек пек выртат, туртса та тухмаст. Ывӑнмаллипех ывӑнса ҫитрӗм. Йакӑв Андрейевич та манран йулмасӑр ҫулса пычӗ. Ку ӗнтӗ, шутлатӑп хам ӑшра—ӳкес патнех ҫитрӗ пуль. Йакку мучи, тетӗп, тавай ларса канар, ывӑнтӑм, тетӗп. „Епӗ те ывӑнма пуҫларӑм пулсан, есӗ ывӑнмах ӗнтӗ", тесе ҫавӑрса хучӗ вӑл мана хирӗҫ. Вӑй питти ҫынна ватӑ ҫын ҫапла калани такама та намӑслантармала.

Серов Йемелйан Тихонович 77 ҫулта. Унӑн халь канма та вӑхӑт. Пӗр йат ҫӗрпе пурӑннӑскер, икӗ хут ҫунса кайнӑскер вӑл, паллах, ӗлӗк те пит нумай ӗҫленӗ. Ҫемйере унӑн ӗҫлекенсем халь пурӗ 4 ҫын. Анчах вӑл хӑй ӗҫлекенни тӑватӑ ҫын тенипе килӗшмест, пилӗк ҫын тет, хӑйне пилӗккӗмӗш шутлат. 77 ҫулта пулин те вӑл кӑҫал хӑйне пурӑнмалӑх ӗҫлесе тырӑ илет.

— Ӗлӗкхи шкулра виҫҫӗмӗш ҫул вӗренмели кӗнеке ҫинче пулнӑ пӗр ӳкерчӗке астӑватӑп,—тет тепӗр ват колхозник.—Ашшӗ ватӑскер, алӑк патне кӑмака сумне ларнӑ та, катӑк чашкӑран шӳрпе ҫийет. Ывӑлӗпе кинӗ сӗтел хушшинче ларса уйрӑм ҫиеҫҫӗ. Виҫ-тӑват ҫулхи ачи урайне ларнӑ та, ҫӗҫӗпе каскалат, „ватӑлсан сана ҫитермели чашӑк тӑватӑп",—тет вӑл ашшӗне. Ӑнланатӑр-и ку мӗне пӗлтерет? Ӗлӗк ваттисене патшалӑхран йе колхозран пулӑшу илесси мар, харпӑрхӑй ывӑлӗ-хӗрӗ те кирлӗ пек пӑхайман. Вӑл ҫуклӑх пирки пулнӑскер. Халь ӗнтӗ вӑл пурнӑҫ иртсе кайрӗ.

Ҫавӑнпа та йашшисем ҫеҫ мар, ваттисем те савӑнаҫҫӗ колхозра. Кӑҫалхи вӑйлӑ тырпул татах та хӗпӗртеттерет вӗсене. Калас пулат, савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ кӑҫал ҫеҫ пуҫланман колхозра. Кун пирки Йаков Никич ҫапла калат:

— Пыратӑп пӗре йал хушшипе,—вӑл 1933 ҫулта пулас,—земски начаљник пурӑннӑ ҫуртра ҫынсем савӑнни илтӗнет. Кӗрсе пӑхас пулат кунта, тетӗп. Пӑхатӑп: пурте колхозниксем—тырпул праҫникӗ ирттереҫҫӗ мӗн. Йурлаҫҫӗ, савӑнаҫҫӗ. Епӗ пур, йединоличник, пуҫа усса ҫӳретӗп. Чӑтаймарӑм. Унччченех нумай шухӑшланӑччӗ, ҫав каҫ тӳсеймерӗм вара: епӗ те сирӗнпе пӗрле пулатӑп, илӗр мана та колхоза,—тесе кӑшкӑрсах йатӑм.

Колхозла пурнӑҫ пурне те илӗртет, пурне те хӑйӗн патнелле туртат, мӗншӗн тесен, хресченшӗн пуйан та кулътурлӑ, савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ патне тухмали ҫул вӑл—колхозла ҫул ҫеҫ.

***

Колхозниксен пурнӑҫӗ лайӑхланни, паллах, колхоз ӳсе ҫирӗпленсе пынинчен килет.

—1930 ҫултан пуҫласа кашни ҫул мӗн те пулин тӑватпӑр,—тет колхозри строителствӑ бригадин бригадирӗ Харитон Лукич.

—Акӑ, 1931 ҫулта, 50 лаша тӑмалӑх ҫӗнӗ вите турӑмӑр. Унтан тепӗр ҫулне 100 пуҫ тӑмалӑх фермӑ валљи ӗне вити турӑмӑр. Тепӗр ҫулне каллах ҫавӑн пекех пысӑк лаша вити тумала пулчӗ. Ку витесем пурте ҫӗнӗ материалтан, йупасем пӗтӗмпех кирпӗчрен. Иртнӗ ҫул тата клуб турӑмӑр,—икӗ хутлӑ пысӑк ҫурт. Строителствӑ тӗлӗшпе пирӗн йалан пӗр бригадӑ ӗҫлесе тӑрат. Ӑна валљи йаланах ӗҫ пур: кирпӗч типӗтмели сарай, витнӗ итемсем, коньухсене пурӑнмали ҫуртсем, фермӑри молочнӑй, шыв арманӗсем патӗнчи ҫурт-йӗрсем, гараж тӑвасси тата ытти вак-тӗвек ӗҫсем—пӗтӗмпех пирӗн алӑ витӗр тухат. Вӗсене туса лӗтеретӗн, каллах теҫӗр тӗрлӗ ӗҫ сиксе тухат.

Колхозӑн хӑйӗн кирпӗч завочӗ пур. Кустарла ӗҫлессӗ пулин те ҫулкаҫа 26 пин кирпӗч туса кӑларат. Колхозпа колхозниксем валљи ҫеҫ мар, сутмалӑх та кирпӗч нумай йулат.

Колхозӑн шыв вӑйӗпе ӗҫлекен 3 арман тата ҫӑм таптармали, ҫу ҫапмали предприйати ӗҫлет. Атӑл ҫинче—перевоз. 1933 ҫултанпа пӗр грузовик ӗҫлет. Жнейкӑсем, молотилкӑсем тата ытти машинӑсем те колхозӑн ҫителӗклӗ. Кунсӑр пуҫне тата МТС хӑйӗн тракторӗсемпе нумай ӗҫлесе парат.

Ӗне ферминче халь пурӗ 107 пуҫ ӗне выльӑхӗ. Лаша витисенче 140 лаша таран.

Пӗтӗм ӗҫ бригадӑсем урлӑ пулса пырат. Харпӑр тӗрлӗ ӗҫре харпӑр тӗрлӗ бригадӑ. Патшалӑх актипе ҫирӗплетсе панӑ ҫӗр ҫинче пурӗ 5 бригадӑ—уй-хир бригади ӗҫлет. Пӗрлештернӗ выльӑх-чӗрлӗхсем патӗнче уйрӑм бригадӑ—выльӑх-чӗрлӗх бригади. Строителствӑ ӗҫӗнче—строителствӑ бригади. Кама мӗнле ӗҫ кӑмӑлла кайат—вӑл ҫав бригадӑра. Кам мӗне пултарат—ҫав ҫавна тӑват. Ҫавӑнпа та колхоз ҫирӗпленсе пырат.

Ӗлӗк йал варринче земски начаљник пурӑннӑ. Унӑн тата ӑна хирӗҫ ларакан Роман Петрович кулакӑн ҫурчӗсем ҫеҫ илемлӗ ҫуртсем пулнӑ. Халь колхоз клубӗ вӑл ҫуртсенчен чылай илемлӗрех. Чылай колхозниксен ҫӗнӗрен лартнӑ пӳртсем вӗсенчен те йулмассӗ.

Земски начаљник тӗлӗнче кунӑн-кунӑн ӗлӗк пасарти пек халӑх тӑнӑ. Нумайӗшӗ куҫҫул йухтарнӑ ку тӗлте. Халь ӗнтӗ кунта земски тавраш ҫук, вӑл тухса тарни 20 ҫул тултарат. Калас пулат, халь те кунта йалсенчен килнӗ лавсем пулаҫҫӗ, анчах вӗсем земски патне мар, урӑх ӗҫпе—ветпункта килнӗскерсем.

Йал тӗпренех улшӑнчӗ, ҫӗнелчӗ. Ӗлӗкхине танлаштарсан, ӑна паллама ҫук. Йал та, халӑх та пуйанланат, кулътурланат. Ҫакӑн пек савӑнӑҫлӑ та тулли пурнӑҫ ҫул-йӗрне кам тупса панине, вӑл ҫулпа кам илсе пынине лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ колхозниксем—вӑл Сталин. Ҫавӑнпа та Аслӑ Октабӗр революцине, Совет Сойузӗнчи пӗтӗм халӑхӑн ҫулпуҫне Сталин йулташа колхоз членӗсем ҫак пурнӑҫшӑн пӗтӗм чӗререн тав тӑваҫҫӗ.

„Колос" колхоз, Тутаркас районӗ—
М. Костин.

Чăваш республикĕнчи Осоавиахимăн районри совет председателĕсемпе пуçламĕш организаци председателĕсене, Осоавиахим членĕсене пурне те

Пирĕн йуратнă тăван çĕршыври ирĕке тухнă аслă совет халăхĕ ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавне вĕçĕмсĕр хаваслăхпа хатĕрленсе пырат, Совет Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă пĕрремĕш кандидата — йуратнă çулпуçне, учителе, аттене Сталин йулташа тата унăн çывăх соратникĕсене чĕре тулли çулăмлă йуратупа пĕр çын пек хапăллат.

Чăваш халăхĕ, парти организацисем йертсе пынипе, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама тăван совет çĕршывĕн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене, государствăна йертсе пыма пултаракан, ĕççынни интересĕсемшĕн кĕрешме пултаракан, халăх тăшманĕсемпе—Германипе Йапони фашисăмĕн троцкисла-бухаринла агенчĕсемпе, буржуалă националиссемпе пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешекен çынсене кандидата палăртрĕ.

Чăваш АСС Республикĕнчи округсенчи суйлав комиççисем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама обществăлă организацисемпе ĕççынни обществисем палăртнă кандидатсене регистрацилесе пĕтерчĕç.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне суйламали Шупашкар суйлав округĕнче З. А. Андрейева йулташ кандидатурине регистрациленĕ, Канаш суйлав округĕнче Й. П. Цыганова й. кандидатурине, Улатăр суйлав округĕнче Л. С. Спасов й. кандидатурине, Çĕмĕрле суйлав округĕнче А. М. Краснов й. кандидатурине регистрациленĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Национальнăçсен Советне РСФС Республикĕнчен суйламали Горький суйлав округĕнче В. П. Чкалов йулташ кандидатурине регистрациленĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Национальнăçсен Советне депутата суйламали Шупашкар йал суйлав округĕнче М. М. Сахйанова йулташ кандидатурине, Шупашкар хула суйлав округĕнче А. И. Стецкий й. кандидатурине, Вăрмар суйлав округĕнче—Г. И. Иванов й., Йĕпреç суйлав округĕнче—С. К. Коротков й., Улатăр суйлав округĕнче — Т. А. Моисейева й., Патăрйел суйлав округĕнче—О. Т. Харитонова й., Вăрнар суйлав округĕнче—П. И. Пумпур й., Çĕмĕрле суйлав округĕнче — И. В. Новиков й., Канаш суйлав округĕнче—А. Ф. Горкин й., Йетĕрне суйлав округĕнче — А. М. Розанов й. тата Çĕрпӳ суйлав округĕнче—П. Д. Краснов й. кандидатурисене регистрациленĕ.

Чăваш республикĕнчи Осоавиахим Тĕп Совечĕ мĕн пур район совечĕсене, пуçламĕш организацисене тата Осоавиахим членĕсене ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидатсемшĕн массăлăн агитацилес ĕçе анлăн сарса йама чĕнет. Осоавиахимăн районри совечĕсен агитаторсем урлă Осоавиахим членĕсем хушшинче Сталин йулташпа унăн соратникĕсем округсенчи суйлав комиççисем патне йанă уçă çыру тăрăх организацилĕ-массăлă ĕçе сарса йамала.

Чăваш АСС Республикĕнчи Осоавиахим Тĕп Совечĕ республикăри мĕн пур Осоавиахим членĕсене округсенчи суйлав комиççисем регистрациленĕ кандидатсемшĕн, хамăр тăван çĕршывăн тивĕçлĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чунтан-чĕререн тăрăшакансемшĕн сасăлама чĕнет.

Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ тата учителĕ Сталин йулташ!

Чăваш АССР Осоавиахим Тĕп Совечĕн председателĕ Г. ОСИПОВ.

Ватă колхозниксене килĕсенчех вĕрентетпĕр

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине вĕренме Шупашкар районенчи Кӳснар йалĕнче 4 кружок тунă. Кружоксене колхозниксемпе колхозницăсем çӳреççĕ. Пайанхи куна кашни кружокрах 4-шар занятти туса иртернĕ. Кружока хĕрарăмсем чылай çӳреççĕ. Занятисем активлă иртеççĕ, анчах çавах та çитменлĕхсем пур-ха. Занятисем вăхăтра пуçланмаççĕ тата хăшпĕрисем занятисене çӳремесĕр тăраççĕ. 3-мĕш участкăри кружокра мĕн пуре 40 çын çӳремелле. Вĕсенчен 60—70 проц çеç çӳреççĕ. Кружок старасти С. Андрейев хăй чух хăй те занятисене пымаст. Кружока çӳреймен ватă колхозниксене ăнлантарма килĕсене çӳретпĕр.

Степанов.

Суйлав саккунне вĕренессине тĕрĕс организацилемен

ВĂРНАР. Мамалай йалсоветне икĕ йал кĕрет, кунта пĕр суйлав участки организациленĕ. Пĕтĕмпе 618 суйлавçă. Çавăн чухлĕ суйлавçăсем валли суйлав саккунне вĕренме 4 кружок кăна организациленĕ.

Вĕрентессе те кунта пухусем пухса вĕрентеççĕ. Кашни пухăва 100 çын йе ытларах пухăнат. Ларма та, тăма та вырăн çук. Çавăнпа та занятти пĕтнĕ çере мĕн пурĕ те 20—25 çын кăна йулат Суйлав саккунне вĕренес ĕç начар, вăл суйлавçăсем пухăнманнине пула пулса пырат, тесе ăнлантарат йалсовет председателĕ Бурмистров йулташ, (вăлах агитатор) Суйлавçăсене вĕрентме условисем туса паманни çинчен шарламаст. Участкăра 618 суйлавçă, паллах вĕсене 4 кружокра пĕр çын вĕрентме пултараймаст. Йалта актив та пур 4 учител, 4 комсомолец, т. ыт. те. Вĕсене ĕçе хутшăнтармаççĕ.

Çавăн пекех Турă Кăканарпа Йермошкинă йалĕсенче те суйлав саккунне вĕренес ĕç лайăх пымаст Агитаципе пропагандă ĕçне манăç хăварнă пирки, Турă Кăканарта ĕлĕк кулак пулнă Тимофейев Семенпе чиркӳ старасти пулнă Федотов Фадей хăйсене майлă агитаци пуçласа йанă. Комсомол организацийĕ çакна туйса илеймен, вĕсене вăхăтра тăрă шыв çине кăларса вĕсен тăшманла ĕçĕсене çапса хуç ман.

А. Платонов.

Колхозник илемлĕ литературă вулат

Турă Сăнарти (Йетĕрне р.) „Çĕнĕ пурнăç“ колхоз членĕ Ф. Васильев 50 çулта ĕнтĕ

Пушă вăхатсене вăл ахаль иртермест. Вăл илемлĕ литература нумай вулат. Йулашки вăхăтра Васильев М. Шолоховăн „Уçнă çерем“, Дм. Фурмановăн „Чапайев“, Фадейевăн, „Хĕрлĕ десант“ произведенийĕсене вуласа тухрĕ Халĕ вăл çĕнĕ Конституципе „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ вĕренет

Г. Федоров

Совет халăхĕн пурнăçĕ телейлĕ те савăнăçлă. Сталинла Конституци йалавĕ йĕнче совет халăхĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хĕрӳлĕн хатĕрленет. Фашисла çĕршывсенче халăхсен массисем тӳсме çук йăвăрлăхра пурăнаççĕ. Германи фашисăмĕ хуçа пулни халăхсене выçă, правасăр, тĕттĕм пурнăçа кăларат. Квалификацилĕ рабочисем, инженерсем, искусствăн талантлă мăстăрĕсем хăйсен пултарулăхĕсене ĕçре тăваймасăр, çуклăхра хĕн-хур курса пурăнаççĕ.

Фашисла Германире

Çак хĕрарăм нимĕç актриссин пулнă.

(Сойузфото).

Амстердамри Интернационал делегацийĕ Мускава килет

ПАРИЖ, нойабĕрĕн 16-ш (ТАСС). Гавас агенстви çапла пĕлтерет: Амстердамри Интернационал бюровĕ йышăнна тăрăх Интернационал делегацийĕ профсойузла пĕрлĕхе ĕçе кĕртессипе калаçса татăлма нойабĕрĕн 20-мĕшĕнче Мускава килме тухат. Делегаци составĕнче Францири ĕçĕн пĕтĕм конфедерацин генеральнăй секретарĕ тата Амстердамри Интернационалăн вице—председателĕ Жуо, Амстердамри Интернационалăн генеральнăй секретарĕ Шевенельс тата Амстердамри Интернационалăн секретар помошникĕ Шгольц пулат.

Колхозниксем мĕлйуншар тенкĕлĕх таварсем илеççĕ

РОСТОВ-ДОН, 16/XI (ТАСС) Донри тата Кубаньри колхозсемпе колхозниксем хăйсене кирлинчен ытлашши тырра копперацине сутаççĕ. Тырă сутса илнĕ мĕлйуншар тенкĕ доходпа колхозсем тĕрлĕрен хаклă йапаласем тата таварсем илеççĕ.

Колхозсем коопераци урлă 2.224 автомашинă, вуншар пин велосипедсем, 2 520 патефон, 21 духовой оркестр валли инструментсем, кĕсйе сехечĕсем 6 пин тата ытти хакла йапаласем те нумай туйанна. Колхозниксем ситца, сукна таварашĕсем тата хатĕр тумтирсем 20 мĕлйун тенкĕлĕх ытла туйанна.

Активиссен пухувĕ

Шупашкарти 12-мĕш номĕрлĕ суйлав участкин суйлав комиççийĕ нойабĕрĕн 18-мĕшĕнче стройтрест клубĕнче суйлав участкинчи активиссен пухуне туса иртерчĕ. Пухува 100 çынна йахăн пуçтаранна.

Суйлав комиççи председателĕ Мартынов йулташ суйлава хатĕрленнĕ май актив умĕнче тăракан задачăсем çинчен доклад туса пачĕ.

Мартынов й. доклачĕ хыççăн 9 çын тухса калаçрĕç.

Зиновйев йулташ (Канашпа Шупашкар хушшинчи чукун çул тунă çĕрте ĕçлет) суйлав вăхăтĕнче тăшманла елементсем, пуп таврашсем ĕçе чăрмантарса пыма пултарасси çинчен чарăнса тăчĕ.

Пуху суйлав кунĕ тĕлне хутла пĕлменнисене пурне те вĕрентсе çитерме йышăнчĕ. Активиссем кандидатсемшĕн больщевикла агитаци сарса йама, кашни рабочине, кашни килхуçи хĕрарăмне суйлав саккунĕ çинчен ăнлантарса пама пулчĕç.

В. Андрейева.
Т. Леонтйева.

Çĕнĕ вите

Йенкĕлтри „Хĕрлĕ Майак“ колхоз (Хĕрлĕ Чутай р.) хĕллене хатĕрленнĕ май 20 лаша валли вите туса лартрĕ.

Пр. Сатур.

Радио итлеççĕ

ЕЛЬК. Йунтапари вулав çуртĕнче хытă калаçакан радио питĕ лайăх ĕçлет. Сăмахсем питĕ уçăмлăн илтĕнеççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем радио итлеме вулав çуртне кашни кунах çӳреççĕ.

В. Н.

Çĕнĕ клуб

„Путь социализма“ колхоз (Хĕрлĕ Чутай р.) Октябĕр уйавĕ тĕлне çĕнĕ клуб туса лартрĕ. Халĕ çак клубра „Путь социализма“ участкăри суйлав комиççи ĕçлет.

Клевĕр пуçтарса кĕртмели комбайн

ЛЕНИНГРАД, 16|XI (ТАСС). Облăçри йалхуçалăх механизацийĕн станци çурçĕр комбайнĕ çумне тунă клевĕр пуçтарса кĕртмели икĕ хатĕре Иваново облăçĕнче сăнаса пăхнă.

45 гектар çинчен вăрлăхлăх клевĕре пуçтарса кĕртнĕ. Комбайнпа пуçтарса кĕртнĕ чухне клевĕр вăрлăхĕ ахаль майпа пуçтарса кĕртнĕ чухнехинчен 15 хут сахалрах тăкăнса йулнă. Комбайнпа пуçтарса кĕртнĕ вăрлăх алăпа ĕçлесе тирпейленинчен 70 процент ытларах шатат.

Сăнавран — вăрлăхлăх клевĕре комбайнпа пуçтарса кĕртни йалхуçалăхне калама çук пысăк усă пани курăннă.

Совет Сойузĕ тăрăх

★ АВТОМОБИЛЬ ÇУЛĔСЕМ ТАЙГАРА. Краснойарск крайĕнче хăшпĕр прискăсемпе рудниксем чукунçулĕнчен пиншер километр айаккинче лараççĕ. Кăçал тайка тăрăх сăрт тусем урлă пуçласа пирвай грузсем çӳретмели çулсем уçаççĕ. Автомобиль çулĕ виççĕ уçаççĕ, вĕсенчен пĕри Йенисейскпа Советки рудник хушшинче, 300 километр тăршĕ тăсăлат. Çулсем тума пурĕ 500 пин тенкĕ тăкакланă.

★ ХĔЛЛЕХИ НАВИГАЦИ УМĔН. Çулахи навигаци пуçланнăранпа нойабĕрĕн 15-мĕшне çитиччен Ленинградри сутуилӳ портĕнче пурĕ 1.034 прахут пулнă. Халь портра совет прахучĕсем 10 тата йутçĕршыв прахучĕсем те тăраççĕ.

Фински заливра декабĕрĕн 1-мĕшпе 5-мĕш хушшинче пăр ларасса кĕтеççĕ. Халь порт хĕллехи навигацине хатĕрленет. Залив пăрĕ ăшĕнчен прахутсене кăларас ĕçре кăçал „Трувор“ тата „Октябрь“ пăр çĕмĕренсем ĕçлеççĕ.

★ ДРАМĂ ТЕАТР УÇНĂ. Ереванре вырăсла Государствă драмă театăрĕ уçнă. Çамрăк театр коллективĕ Арменири культурлă организацисенчен тата ССР Сойузĕн чылай театрсенчен саламлă телеграммăсем илнĕ,

★ ÇУРÇĔРТИ СИВĔ ÇАНТАЛĂК. Çурçĕрте халь сивĕ çанталăк тăрат. Çĕпĕрти нумай йуханшывсем пăрпа витĕннĕ. Краснойаркă крайĕнчи йур икĕ метр хуламĕш ларнă. Иркутск облăçĕнче 40 градуса çити сивĕ çанталăк пулнă.

★ ПАКША ТИРĔСЕМ. Горькинчи спорт тата ухата таварĕсен магазинĕ нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче облăçри пакша тирĕсене илме пуçланă. Нойабĕрĕн малтанхи кунĕсенче пурĕ 800 штук пакша тирĕ йышăннă. Чкаловск районĕнчи Иван Михайлович Микарев ухатник пĕччен 76 тир пană.

★ ТРАМВАЙЩИКСЕН ВĔРЕНĔВĔ. Горькинчи тармвай управленин системинче инженерла-техникла работниксем 45 çын техучебă кружокĕсене йертсе параççĕ. Вагоновожатăйсем, кондуктăрсем, диспетчерсем т. ыт. те кружоксенче хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстереççĕ.

Хаçат пичетлемели машинă

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Районри хаçат „Çĕнтерӳ çулĕ“ халиччен пĕчĕк форматпа, тĕссĕр тухса тăнă. Хаçат американкă текен пĕчĕк машинăпа пичетленнĕ. Йулашки кунсенче районри хаçат типографине çĕнĕ пысăк машинă илсе килчĕç. Машинăна майлаштарса çитерчĕç ĕнтĕ. „Çĕнтерӳ çулĕ“ хаçат çак кунсенчех пысăк форматпа пичетленсе тухма тытăнат.

Йак. Сигай.

Çитĕннисене вĕренмели вăтам шкул

ИШЛЕЙ (хамăр корр.). Нойабĕрĕн 15-мĕшĕнче Ишлейри вăтам шкулта çитĕннисене вĕренмели вăтам шкул ĕçлеме пуçларĕ. Унта туллимар вăтам шкул тата малтан колхоз çамрăкĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухнисем 28 çын вĕренеççĕ.

П. Архипов.

III-мĕш колхоз театăрĕн ĕçĕсем

ЙЕТĔРНЕ. Чăвашсен III-мĕш колхоз театрĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнче 12 кун хушши спектакльсем лартса çӳрере. Театр Ф. Павловăн „Йалта“ пйессине кăтартрĕ. Кашни йалтах спектакль курма калама çук нумай халăх пухăнат. Клуба шăнăçайманнипе кураймасăр йулнисем тепĕр кунне пирĕн хыçран çитес йала пырса пăхаççĕ.

Хальхи вăхăтра, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи гастрольрен çаврăнса килнĕ хыççăн, театр чăвашсен паллă драматургĕ П. Н. Осипов çырнă „Айдар“ пйесăна лартма хатĕрленсе çитрĕ. „Айдар“ пйесăна малтанхи хут нойабĕрĕн 20-мĕшĕнче Йетĕрне хулинче выльаса паратпăр. Унтан районсем тăрăх тухса кайатпăр.

Иккĕмĕш режиссер

Г. Ашмарин.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Радиокомитет вырăнти радиовешчанисен ĕçĕсене тĕрĕслемест

(Хамăр корреспондентран)

Пĕтĕм ĕçхалăхĕ пысăк хаваслăхпа ССРС Аслă Советне суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра вырăнти радиоузĕлсен вырăнĕ питех те пысăк. Çĕмĕрле радиоузĕлĕнче çавна ăнланса илмен ха. Кунта ĕçлекенсем хăйсем тĕллĕн çеç „ĕçлесе“ пыраççĕ. Вырăнтан передачăсем памаççĕ Темле вăра уйăхра пĕрре йе икĕ хутчен районта тухса тăракан „Социалисăмла ĕç“ хаçат обзорне параççĕ, ăна та тухнă кунмар, 3—4 кун иртнĕ хыççăн вулаççĕ. Нойабĕрен 2-мĕшĕнче тухнă хаçатра райĕстăвкомăн „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлассипе организациленĕ участкăри суйлав комиççисене çирĕплетесси“ çинчен кăларнă постановленине икĕ кун иртсен çеç вуласа пачĕç. Ку постановленийе пĕр передачăрах парас вырăнне икĕ кун хушшинче те аран-аран вулакаласа пачĕç. Вулаканĕ Лебедева участкă комиççи членĕсен хушамачĕсене кăнамар, суйлав участкин вырăнĕсене те çав тери пасса, ăнланмала мар вуласа пачĕ.

Клубсенче, театрсенче каçхине мĕнле спектакль, кино кăтартмалли, лавкасене мĕнле таварсем килни çинчен рекламăсем час-часах илттме пулат. Тересçипе каласан кунта та пăтраштарса параççĕ, пайан пулакан кино картинăна вырăнхине пайан пулат, тесе суйĕç тереççĕ. Вырăнти передачă пынă вăхăтра кулни, шăхăрни, пĕчĕк ача сасси илтенет.

Суйлав кампанийĕ пуçланнăранпа уйăх ытла иртрĕ. Анчах Çĕмĕрлере Аслă Совета суйлама хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен вырăнти радиоузелтан пĕр передачă та пулман. Çĕмĕрле—ССРС Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе суйлав округĕсен центрĕ пулса тăрат. Кунта канашлусем, пухусем пулса иртеççĕ. Рабочисемпе служащисем, колхозниксем Аслă Совета телейлĕ çĕршывăн чунтан тăрăшса ĕçлекенсене депутата суйлама кандидатурăсем палартрĕç. Çав тери саванăçлă, пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ предприйатисенче. Аслă Совета суйламали куна çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн производствăлă йухăм вăйланса пырат. Çавсене вырăнти радиовешчанин „Йулашки хыпарсен“ редакцийĕ пачах курмаст. Весем çинчен уйăх хушшинче те пĕр хутчен те радио тăрах пĕлтермен.

Радиовешчанинче Афанасйевпа Лебедева ĕçлеççĕ. Весем Чăваш республикĕнчи радиокомитетран ĕçукçийĕ илсе тăраççĕ. Ĕçукçине паракансем пĕлеççĕ-ши Афанасйевпа Лебедевăн ĕçĕсем çинчен. Пĕлеççĕ. Кăçал, çентабĕрĕн 8-мĕшĕнче пулса иртнĕ парти райкомĕн бюрове П. Афанасйевăн ĕçĕсене пăхса тухса, ăна райком инструктăрĕнчен кăларчĕ. Çавăн чухнех радиокомитет председателне Сокольникова пĕлтернĕччĕ. Çапах Афанасйев халĕ те радиоузĕлтах ĕçлет,

Октябĕр уйăхĕнче партин пуçламĕш организацийĕ Афанасйева партирен кăларат. Радиокомитет кун çинчен те пĕлнĕ. Анчах ним те туман.

Кам вăл Афанасйев? Афанасйев ку таранчен парти райкомне улталаса пурăннă Унăн ашшĕне 1921 çулта совет власне хирĕç танăшăн персе вĕлернĕ пулнă. Куна Афанасйев „пирĕн аттене хулигансем вĕлернĕ“ тесе суйнă. Унăн ашшĕ кулак пулнă, йаланах çĕр тара илсе акнă, хăй патĕнче çынсене ĕçлеттернĕ. Кунсене те Афанасйев каламан. Райком инструктăрĕнче ĕçленĕ чух халăх тăшманĕсене курсах, вĕсемпе кĕрешмен. Радиоузела „Йулашки хыпарсем“ паракан отдела ниме йурăхсăр летуна, комсомолтан кăларнă Алексеева ĕçе илсе нумай вăхăт хушши ĕçлеттернĕ. Вăл суйа материалсем вуласа панине Афанасйев пĕлсе тăрсах, нимĕн те туман.

Питех те тĕлĕнмеле. Çак ирсĕрлĕхсене курсах Чăваш радиокомитет (председателĕ Сокольников) Афанасйева микрофон умĕнче „ĕçлеттерет“. Ыйтас килет: Сокольников ПСК(б)Парти Тĕпкомĕ Украйнăри радиокомитет ĕçĕсем çинчен йышăннă решенисене вуланă-ши?

Хар. Лисин.

ЧĂВАШЛЕСПРОМСОЙУЗА—
Шупашкар, Кадыков урамĕ 7

Йалан ĕçлеме

Вăрнарта, Шупашкарта, Кивĕ Ейпеçре, Çĕмĕрлере тата Сурмайданра ĕçлесе пурăнма

Пилĕк лесотаксатор кирлĕ

Чăвашлеспромсойуз.

2—1.

Шупашкарти
Автогужтрест уйрăмне

кирлĕ:

Електромотор 10 к.-ваттлă—1.

Електромоторсем 500 ваттлă—2.

Çак адреспе пĕлтермеле:
Шупашкар, Автовакзал, директăра

2—2

ДЕТКОМИÇÇИН ÇĔМĔРЛЕРИ
КАТКА-ПИЧКЕ ЗАВОДНЕ

çăкаран катка-пичке тăвакан

РАБОЧИСЕМ КИРЛĔ

УСЛОВИСЕМ: Ĕçукçи — хальхи расценкă тăрăх. Ĕçе пыма тухнă çул укçи расхутне тӳлеççĕ.
Хватерсем пур.

Завод дирекцийĕ.

2—2

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав
Халăх Комиссариатне

шут ĕç работникĕсем кирлĕ:

аслă бухгалтер 1
бухгалтерсем 2

Çак адреспа пымала: Шупашкар хули, Заводскайа урамĕ, 6 № çурт

2—2

Чăваш республикĕнчи
Госсортфонд кантурне

МАШИНИСТКА КИРЛĔ

ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ,
Госсортфонд

2—1

Чăваш АÇСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ

Кăçалхи нойабĕрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа Шупашкарта шкул çулне çитмен ачасене воспитани паракан работниксене хатĕрлемели ÇУЛТАЛĂКЛĂХ КУРС УÇАТ. Курса туллимар вăтам шкул программи чухлĕ вĕреннисене, 17 çултан иртнисене илеççĕ.

Зайавлени çумне çак документсем кирлĕ:
1. Малтан вĕренни çинчен.
2. Хăш çулта çуралнине кăтартакан хут.
3. Сывлăх пирки свидетелствă.
4. Ăçта ĕçлени çинчен справкă.
5. Икĕ фотокартăчкă.

Курсантсене стипенди тата хватер параççĕ.

3—3. Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ.

Пур суйлавçăсене те

„КОГИЗ“-ăн пур магазинĕсенче те ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе кăларнă çак кĕнекесем пур

Положение о выборах в Верховный Совет СССР (вырăсла) хаке 10 пус.
ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени (чăвашла) хаке 10 пус.
Конституция СССР (Сталин йулташ доклачĕпе пĕрле) 70 пус.
Конституция ЧАССР (вырăсла) хакĕ 20 пус
Чăваш АССР Конституцийĕ (чăвашла) хакĕ 25 пус
Калинин: Что дала Советская власть трудящимся 15 пус
Калинин ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени тата советсен задачисем (чăвашла) хакĕ 10 пус
Наша родина—Сборник хакĕ 85 пус
СССР и страны капитализма хакĕ 80 пус
О выборах в Верховный Совет СССР—ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн постановленийĕ хакĕ 15 пус

СУЙЛАВÇĂСЕМ!

Асăннă кĕнекесене КОГИЗ магазинĕсенче—Шупашкарта, Улатăрта, Канашра, Çĕмĕрлере, Йетĕрнере, Çĕрпӳре, Сĕнтĕрвăрринче илме пулат. Çавнашкалах Шупашкартан наложенный платежпа „Книга—почтой“ урлă çырăнса илме пулат.

Йалсоветсем, колхозсем, шкулсем тата профессилĕ Сойузсен комитечĕсем ку кĕнекесене суйлавçăсене валли илсе парăр.

Плакатсемпе схемăсем сутлăх пур:

Конституция СССР—плакат хакĕ 50 пус.
Положение о выборах—плакат хакĕ 50 пус
Схема выборов в Верховный Совет СССР 70 пус
Суйлавçăсем пирки 5 схемă (чăвашла) Чăвашсен Государствă Издателстви кăларнă хакĕ 1 т. 20 пус

Çавнашкалах тата Сталин йулташăн доклачĕ тата Молотов йулташăн сăмахĕ грампластинкăсем çинче пур. Кашни альбом хакĕ 77 тенкĕ те 40 пус.

„КОГИЗ“-ăн Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ.

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха —2 т. 50 пус. Алçырăвсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 872 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста Заказ № 2370 Тираж 13964 58—92 см. 1—1 п. л.